Чувашская Республиканская БИБЛИОТЕКА им. М. Горького

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1956 çул
Февраль
19
ВЫРСАРНИКУН
№ 37 (9716)
Хакĕ 20 пус.
38-мĕш çул тухать.

Рабочи класпа хресченсен парти туптаса çирĕплетнĕ никам çĕмĕрейми союзĕ пĕтĕм совет обществин гранит пек çирĕп никĕсĕ пулса тăрать. Парти промышленноçпа ялхуçалăх енĕпе пурнăçласа пыракан пысăк мероприятисем хулапа ялти ĕççыннисен пурнăçне малалла лайăхлатма, рабочи класпа колхоз хресченĕсен производствăлла çыхăнăвне вăйлатма, халăх массисен творчествăлла активлăхне ÿстерме пулăшаççĕ.

Парти ертсе пынипе—малалла, коммунизм çĕнтерĕвĕ патне!

Тăван çĕршывăн столицинче—Мускавра, Кремльти Пысăк дворецра, Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XX съезчĕ ĕçлет. Съезд пирĕн чаплă çĕнтерÿсен итогне тăвать, коммунизм строительствинчи малашнехи аслă ĕçсен пысăкран та пысăк программине йышăнса çирĕплетет. Съезд улттăмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе пирĕн çĕршыври икçĕр миллионлă халăхăн çирĕп шухăш-кăмăлĕпе хăватлă пултаруллă вăйне палăртса тăракан Директивăсем парать. Акă мĕншĕн пĕтĕм совет халăхĕ, тĕнчери мĕнпур ĕçсыннисем партин XX съезчĕн ĕçне пысăк тимлĕхпе сăнаса тăраççĕ.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ партин XX съездне туса панă отчетлă докладра, съезд делегачĕсен сăмахĕсенче пирĕн паттăр рабочи класĕн, мухтавлă колхоз хресченĕсен, халăхран тухнă тата уншăн ырми-канми тăрăшса ĕçлекен совет интеллигенцийĕн шухăш-кăмăлĕсемпе çутă ĕмĕчĕсем уççăн палăрса тăраççĕ.

Совет çыннисем çакна лайăх пĕлеççĕ: пирĕн парти халĕ нихçанхинчен те çирĕп пĕрлĕхлĕ, вăл Центральнăй Комитет тавра тачă пĕтĕçсе тăрать, парти çĕршыва аслă Ленин кăтартса панă çулпа шанчăклăн малалла илсе пырать.

Совет халăхĕн историлле чаплă çĕнтерĕвĕсене Коммунистсен партийĕ аслăн ертсе пынипе, ленинла принципсене çирĕппĕн пурнăçа кĕртнипе, партин организаторла ĕçне вăйлатнăçемĕн вăйлатнипе, парти халăхпа ялан тачă çыхăнса тăнипе тунă. Партин отчетлă тапхăрти ĕçĕсем тĕрĕс те питĕ вăхăтра пурнăçланă ĕçсем пулчĕç. Вĕсем социализмла экономикăна пĕрмаях вăйлатма, совет халăхĕн материальнăй пурнăçне малалла лайăхлатса, культурине ÿстерсе пыма пулăшрĕç. Çак çулсенче парти вилĕмсĕр Ленинăн аслă ялавне яланах çÿлте тытса пычĕ. Ленинизм вĕрентĕвне пурнăçа тĕрĕс кĕртсе пыни—акă вăл пирĕн партин мĕнпур çитĕнĕвĕсен çăлкуçĕ.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн ĕçĕсем çинчен КПСС Центральнăй Комитечĕн Пĕрремĕш Секретарĕ Н. С. Хрущев партин XX съездне туса панă отчетлă доклада пирĕн республикăри ĕçсыннисем, пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле, тулли кăмăлпа, чун-чĕререн хапăл туса, хĕрÿллĕн ырласа йышăнчĕç. Вĕсем Коммунистсен партийĕн шалти те тулашри политикине, партин тĕп çулйĕрне—социализмла экономикăн мĕнпур отраслĕсене аталантармалли, пирĕн Тăван çĕршывăн оборонине тĕреклетмелли, халăх пурнăçне лайăхлатмалли никĕс пулса тăракан йывăр промышленноçа пуринчен ытларах ÿстермелли тĕп çул-йĕре — ăнăçлăн пурнăçа кĕртме хăйсен мĕнпур вăй-халĕпе, хастарлăхĕпе, пултаруллăхĕпе пулăшма хатĕррине çинчен пĕлтереççĕ.

Çак кунсенче пур çĕрте те—предприятисемпе çĕнĕ стройкăсенче, транспортра, колхозсемпе совхозсенче, машина-трактор станцийĕсенче ĕçсыннисем партин XX съезчĕн хаклă документĕсене пĕрле пухăнса вулаççĕ, вĕсене съезд материалĕсемпе паллаштарма агитаторсем калаçусем ирттереççĕ. Предприятисемпе колхозсенче нумайăшĕнче ĕçсыннисен пухăвĕсемпе митингĕсем пулса иртеççĕ. Митингсемпе пухусенче пур çĕрте те КПСС Центральнăй Комитечĕн отчетлă докладне хĕрÿллĕн ырлаççĕ. Кунта акă мĕн уйрăмах паха: кашни ĕçсынни, харпăр хăйĕн чĕрери ырă туйăмне, ĕмĕт-кăмăлне, савăнăçне палăртса, пирĕн парти çĕршыв экономикипе культурине малалла вăйлатас тĕлĕшпе тăвакан ĕçсене татах активлăнрах хутшăнма пулаççĕ.

Шупашкарти электроаппаратура заводĕнче ĕçлекенсен митингĕнче паллă фрезеровщик Королев юлташ çапла каланă:

— Н. С. Хрущев юлташăн докладне вулатăп та пирĕн юратнă Тăван çĕршывăн çитĕнĕвĕсем мĕн тери чаплă, улттăмĕш пилĕкçуллăхри задачăсем калама çук пысăк пулнине куратăп. Эпĕ, Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XX съезчĕ ячĕпе социализмла ăмăртăва хутшăнса, кашни уйăхри задание 350 процент тултарса пыма сăмах панăччĕ. Хамăн обязательствăна эпĕ чыслăн пурнăçласа пыратăп. Съезд уçăлнă вăхăт тĕлне эпĕ çур çул хушшинчи задание пурнăçларăм. Парти халăх хуçалăхне малалла вăйлатас, ĕçсыннисен пурнăçĕпе культурин шайне татах та çĕклес тĕлĕшпе палăртнă пысăк ĕçсене ăнăçлă пурнăçлас тесе, эпĕ малашне те ырми-канми тăрăшатăп.

Совет çыннисене пирĕн çĕршыв халĕ хăвăрт та вăйлă малалла кайса пыни савăнтарать. Вĕсем ăна малалла тĕреклетес ĕмĕтпе пурăнаççĕ.

— Н. С. Хрущев юлташăн докладĕ тата делегатсен хĕрÿллĕ сăмахĕсем,—тет Ишлей районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Тересов юлташ,—пире ялхуçалăхĕнче çĕнĕ çитĕнÿсем тума хавхалантараççĕ. Улттăмĕш пилĕкçуллăхри ялхуçалăхĕн задачисене эпир срокчен—çитес 2—3 çул хушшинчех пурнăçлама пултаратпăр. 1955 çулта кашни 100 гектар çĕр пуçне 93 центнер сĕт суса илтĕмĕр пулсан, 1957 çулта 160-шар центнер туса илетпĕр, 1958 çул тĕлне сысна ашĕ сухалакан кашни 100 гектар çĕр пуçне 30-шар центнер туса илме тытăнатпăр, урăхла каласан, сысна ашĕ ун чухне пĕлтĕрхинчен 5 хут нумайрах туса илетпĕр.

Колхозлă ял ĕçченĕсене партин пирĕн пурнăça, совет çыннисен шухăш-кăмăлĕсене, обществăлла хуçалăха вăйлатмалли пысăк майсене тĕплĕн те тĕрĕс пĕлсе тăни савăнăç кÿрет.

— Парти пĕтĕм совет халăхĕ çултан-çул лайăхрах, пуянрах пурăнтăр тесе тăрăшать, — тенĕ Чкаловски районĕнчи «Путь Ленина» колхозри доярка-комсомолка Валентина Раськина.—Пирĕн çĕршывра промышленноçа тата ялхуçалăхне çĕнĕ хăватпа аталантарма пысăк ĕçсем туса ирттереççĕ. Çак ĕçсем [illegible] пурте аслă çулпуçăмăр Ленин туса хунă парти ячĕпе çыхăннă. Пирĕн малашне тата лайăхрах ĕçлемелле.

Çак кунсенче, çапла ĕнтĕ, кашни совет çынни хăйне умне пысăкрах требованисем лартать. Ĕçсыннисен хастарлăхне, Тăван çĕршыва ырлăхне, халăх телейне ÿстерессишĕн тăрăшни, партин XX съезчĕ ячĕпе ĕç вăхăтне тăрса çĕнĕ обязательствăсем йышăнни шăпах ĕнтĕ халăх Коммунистсен аслă та аслă партине вĕçĕмсĕр юратнине кăтартса парать.

Республикăра 1956 çулхи плана—улттăмĕш пилĕкçуллăхăн пирвайхи çулĕнчи плана срокчен пурнăçлассишĕн социализмла ăмăрту вăйланнăçемĕн вăйланса пырать. Вырăнти партипе совет тата профсоюз организацийĕсен ĕçсыннисен политикăлла тата ĕçри активлăхĕне умра тăракан задачăсене ăнăçлăн пурнăçлас, ĕçри пысăк çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтерес ĕçре усă курмалла.

Пирĕн умра тăракан задачăсем çав тери пысăк та ответлă. Анчах вĕсене пурнăçлама пирĕн вăй çителĕклĕ. Коммунистсен партийĕ хавхалантарса тата çул кăтартса пынипе, улттăмĕш пилĕкçуллăхра совет халăхĕ коммунизм строительствинче малалла çĕнĕ пысăк утăм тăвĕ. Хамăрăн тĕп тĕллев патне—коммунизм обществи патне—каймалли çул çинче аслă тавралăх халĕ ĕнтĕ уççăн курăнать. Марксизм-ленинизм вĕрентĕвĕн ялавне Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ совет халăхне коммунизм çĕнтерĕвĕ патне илсе çитерĕ.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕнче

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн ларăвĕнче СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕн Заместителĕ М. П. Тарасов СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председательне К. Е. Ворошилова Ленин орденĕ, «Ылтăн Çăлтăр» медаль тата Совет Союзĕн Геройĕн грамоти панă. К. Е. Ворошилова Совет государствине хÿтĕлес тĕлĕшпе тава тивĕçлĕ пысăк ĕçсем тунăшăн наградăланă.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн членĕсем К. Е. Ворошилова, вăл пысăк наградăна илнĕ май, ăшшăн саламланă, çирĕп сывлăхлă пулма тата совет халăхĕн ырлăхĕшĕн государствăпа парти ĕçĕнче çĕнĕ çитĕнÿсем тума ырă суннă.

Ленин орденне тата Совет Союзĕн Геройĕн отличи паллисене илсе, К. Е. Ворошилов пысăк наградăшăн Партипе Правительствăна тав тунă, хамăрăн çĕршыври аслă коммунизм строительстви ĕçне пĕтĕм вăй-хала парăп, тесе шантарса каланă. (ТАСС).

СССР Хĕçпăшаллă Вăйĕсем 38 çул тултарас умĕн

Çĕршыври хуласемпе ялсенче Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 38 çул тултарнине уявлама тимлĕн хатĕрленеççĕ. Предприятисенче, учрежденисенче, çар чаçĕсенче Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ—социализм çĕршывĕн хăватлă Хĕçпăшаллă Вăйĕсен организаторĕ çинчен, Тăван çĕршыва хÿтĕлекенсен Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче питĕ паттăр çапăçни çинчен докладсем, калаçусем тата лекцисем ирттереççĕ.

Совет Çарĕпе СССР Тинĕс-Çар Флочĕн мухтавлă историйĕ çинчен [illegible] докладсемпе калаçусене Мускавра Сталин ячĕпе тăракан автомобиль заводĕнче, Государствăн Л. М. Каганович ячĕпе тăракан подшипниксем тăвакан заводĕнче, «Станколит» заводра тата столицăри ытти предприятисенче ирттернĕ.

Совет Çарĕн центрти Фрунзе ячĕпе тăракан çуртĕнче Мускав гарнизонĕнчи çамрăк офицерсемпе Совет Çарĕн ветеранĕсен тĕлпулăвĕ—вечерĕ пулса иртнĕ.

Çĕршыври нумай хуласенче пăшалпа тĕл перес енĕпе заочно ирттерекен ăмăртусем пуçланнă. Стрелково-спортивный клубсем тата офицерсен клубĕсем пăшалпа тĕл перес енĕпе мала тухассишĕн ăмăртаççĕ. (ТАСС).

СОВЕТ СОЮЗĔНЧИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙĔН XX СЪЕЗЧĔ

КПСС XX съезчĕн Мандат комиссийĕ тунă доклад

А. Б. АРИСТОВ юлташ докладĕ

Юлташсем! Съезда Мандат комиссийĕн ĕçĕсем çинчен каласа пама ирĕк парăр.

Партин XIX съезчĕ пулнăранпа виçĕ çул çурăна яхăн иртрĕ. Апла пулсан, çак съезд парти Уставĕнче кăтартнă срокра пухăнчĕ. Устав тăрăх черетлĕ съездсем кашни тăватă çулта пĕр хутран кая мар пухăнмалла. Çакă вăл партин шалти демократине аталантарас тĕлĕшпе пысăк вырăнта тăрать, мĕншĕн тесен съезд вăл—партин аслă органĕ.

Коммунистсен партийĕн никĕсне хывакан тата унăн çулпуçĕ аслă Ленин парти строительствин принципĕсемпе партин пурнăçĕн нормисене туса хатĕрленĕ, çав принципсемпе нормăсене пурнăçласа пыни пирĕн партие идейăпа политика тата организацилĕх енчен яланах никам аркатайми пĕрлĕхлĕ пулма, дисциплинăна çÿлте тытма, çав тери тĕреклĕ пулма тата ĕçсынни массисемпе парти хушшинчи çыхăнусене çирĕплетнĕçемĕн çирĕплетсе пыма май панă. Ленин çапла вĕрентнĕ: коллективлăн ертсе пырас принципа çирĕп пурнăçласан кăна пĕтĕм парти тата унăн мĕнпур организацийĕсем йĕркеллĕ ĕçлеме пултараççĕ, çакă вăл коммунизм строительствин задачисене тĕрĕс ăнланма тата ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыма чи кирлĕ услови пулса тăрать.

Паллă ĕнтĕ, КПСС Центральнăй Комитечĕн 1953 çулта пулса иртнĕ июльти Пленумĕ партин ертсе-пырас ĕçри çак чи паха принципа уйрăм çынсене ытлашши пысăка хунине пула хытă пăснине палăртрĕ тата партин ертсе пырас ĕçне çÿлтен пуçласа аяла çитиччен коллективлăн туса пыма кирли çинчен Ленин кăтартса панисене çирĕппĕн пурнăçлама, парти организацийĕсен активлăхне, пуçарулăхне, ĕçри пултаруллăхне пур майсемпе те ÿстерсе пыма хушрĕ.

Нумаях пулмасть парторганизацисен отчетпа суйлав пухăвĕсем, партин районти, округри, хулари, облаçри, крайри конференцийĕсем, союзлă республикăсенчи компартисен съезчĕсем пулса иртрĕç, вĕсем партин шалти демократине малалла аталантарса пынă, парти массисен активлăхĕ пысăк пулнă лару-тăрура иртрĕç, коммунистсен идейăлла ÿсĕмне, большевикла принциплăхне, вĕсен ĕçри хастарлăхне, вĕсем çитменлĕхсемпе ним килĕшми кĕрешнине кăтартса пачĕç. Рядовой коммунистсем, конференцисемпе съездсен делегачĕсем партин ертсе пыракан органĕсен ĕçне тĕплĕн сÿтсе яврĕç, партин хуçалăхпа культура строительствинчи ĕçĕн практикăлла задачисене палăртрĕç, парти комитечĕсене, çавăн пекех КПСС XX съездне кайма делегатсем суйларĕç.

Мандат Комиссийĕ съезда çапла пĕлтерме кирлĕ тесе шутлать: партин облаçри, крайри конференцийĕсенче тата союзлă республикăсенчи компартисен съезчĕсенче пуринче те парти комитечĕсен членĕсене суйласси тата КПСС XX съездне кайма делегатсем суйласси пирĕн парти речĕсем никам аркатайми пĕрлĕхлĕ пулнă лару-тăрура иртнĕ.

Мандат комиссийĕ çакна палăртрĕ: партин пур организацийĕсенче те партин XX съездне кайма делегатсене парти Уставĕн требованийĕсемпе пĕтĕмĕшпех килĕштерсе суйланă. Съезда каякан делегатсене хупă (вăрттăн) сасăласа суйланă. Полномочисене тĕрĕслесе пăхни çакна кăтартса пачĕ: съезд делегачĕсем пулма суйланнисем пурте кирлĕ чухлĕ сасă илнĕ. Суйлавсем ирттермелли йĕркене пăсни пулман. Комисси съезда килнĕ пур делегатсен полномочийĕсене те тĕрĕс тесе шутлать.

Юлташсем!

КПСС XX съездне делегатсем суйлама Центральнăй Комитет представительство нормисене партин иртнĕ XIX съезчĕ чухнехи пекех тунă: партин 5.000 членĕ пуçне ĕç тăвакан сасăпа пĕр делегат тата партин членĕн 5.000 кандидачĕ пуçне канашлакан сасăпа пĕр делегат. Çапла вара партин XX съездне пурĕ ĕç тăвакан сасăпа 1.355 делегат тата канашлакан сасăпа 81 делегат суйланă. Суйланă делегатсем пурте съезда килнĕ, ĕç тăвакан сасăпа суйланă, ултă делегат кăна чирлĕ пирки съезда килеймен.

КПСС XX съездне иртнĕ съездринчен 77 çын ытларах суйланă, çакă вăл пирĕн парти речĕсем ÿснинчен килнĕ.

Хальхи вăхăтра Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ 7.215.505 çын пĕрлештерсе тăрать, вăл шутра парти членĕсем 6.795.896 çын, парти членĕн кандидачĕсем 419.609 çын. Партин XIX съезчĕ тĕлне—1952 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне — парти речĕсенче членсем 6.013.259 çын, парти членĕн кандидачĕсем 868.886 çын, пурĕ 6.882.145 çын пулнă.

Ку цифрăсенчен çакна куратпăр: партин XIX съезчĕ иртнĕренпе коммунистсен пĕтĕм хисепĕ 333.360 çын ÿснĕ. Çак вăхăт хушшинче парти членĕсен хисепĕ 782.637 çын ÿснĕ, КПСС членĕн кандидачĕсен хисепĕ, пачах урăхла, 449.277 çын чакнă, çавна пула XX съезда канашлакан сасăпа делегатсем 86 çын сахалтарах суйланă.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕнче парти членĕн кандидачĕсен пĕтĕм хисепĕ, иртнĕ съезд чухнехипе танлаштарсан, икĕ хута яхăн сахалланни парти организацийĕсем парти членĕн кандидачĕсемпе ĕçлессине лайăхлатнинчен килнĕ, çавна пула партин XIX съезчĕ тĕлне кандидат стажĕ иртсе кайнă кандидатсене Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн членне илнĕ.

Парти речĕсем ÿснине кăтартакан цифрăсем мĕн çинчен калаççĕ-ха? Çак цифрăсем пирĕн çĕршыври ĕçсыннисем Коммунистсен партине, Ленин каланă пек, пирĕн саманан ăсĕ, чысĕ тата совеçĕ тесе, коммунизмлă общество тăвассишĕн пыракан кĕрешÿри хăйсен тĕрĕсленĕ руководителĕ тесе шутланине пĕлтереççĕ. Парти ĕçне, хăйĕн тĕрĕс политикине массăсен шанăçне тивĕçлĕ пулчĕ.

Коммунистсен партине рабочи класс пăхса ÿстернĕ, ăна халăх суратнă, вăл халăхшăн ĕçлет. Çакăнта пулать те ĕнтĕ парти ĕçсыннисен массисемпе ним уйрăлми çыхăнса тăни, партипе халăхăн нихçан аркаими пĕрлĕхĕн хăватлă çăлкуçĕ. Рабочи класĕн, колхоз хресченĕсен, совет интеллигенцийĕн чи лайăх представителĕсем пирĕн парти ретне кĕме тăрăшни çакăнтан килет те ĕнтĕ.

Коммунизмăн пурлăхпа производство никĕсне тумалли ленинла аслă политика, йывăр индустрие пуринчен ытларах аталантармалли политика промышленность центрĕсемпе районĕсем çĕннисем те, ĕлĕк тунисем те малалла ÿссе пынинчен палăрчĕ. Çакна Уралта, Çĕпĕрте, Казахстанра тата пирĕн çĕршыври ытти нумай районсенче хуçалăх аталанса пынă тĕслĕхрен уйрăмах лайăх курма пулать.

Сăмахран, Кузбасс халĕ çĕр кăмрăкĕ кăларас тĕлĕшпе çĕршывра иккĕмĕш вырăн йышăнать. Челябинск облаçĕ хальхи вăхăтра революцичченхи Россиăри пĕтĕм металлурги промышленноçĕ туса кăларнă металтан икĕ хут ытларах метал парса тăрать. Пушкăрт тата Тутар республикисенчи нефть кăларакан çамрăк промышленность, пысăк хăвăртлăхсемпе аталанса, çĕршывра малти вырăнсенчен пĕрне йышăнчĕ. Çав вăхăтрах ĕлĕкхи промышленность районĕсем те ăнăçлăн аталанса пыраççĕ.

Промышленность аталаннă май çав индустри центрĕсенче рабочи класс та пĕрмаях ÿссе пырать. Хальхи вăхăтра Уралта промышленноçăн тĕрлĕ отраслĕсенче 1940 çулхинчен икĕ хута яхăн ытларах рабочисемпе служащисем ĕçлеççĕ. Çавна май парти организацийĕсем те ÿссе çирĕпленеççĕ. Свердловск облаçĕнчи парторганизаци 119.784 коммуниста пĕрлештерсе тăрать, вĕсенчен çуррине яхăн промышленноçра ĕçлет. Челябинск облаçĕнчи парторганизацире 91.550 коммунист, Кемерово облаçĕнчи парторганизацире 78.302 коммунист шутланать. Çак организацисенчи коммунистсенчен 40 проценчĕ ытла промышленность производствинче ĕçлет.

Съездра чи йышлă делегацисем çĕршыври промышленноçăн тĕп районсенчен килнĕ делегацисем пулса тăраççĕ. Сăмахран, Мускав облаçĕнчи парторганизаци съезда 150 делегат суйланă, Ленинград облаçĕнчен—66, Свердловск облаçĕнчен—26, Горький облаçĕнчен—21, Куйбышев облаçĕнчен—20, Челябинск облаçĕнчен—19, Пушкăрт тата Тутар республикисенчен—17-шер, Молотов тата Кемерово облаçĕсенчен—16-шар делегат.

Украинăри Коммунистсен партийĕн парторганизацийĕсем съезда ĕç тăвакан сасăпа 191 делегат суйланă. Киев облаçĕнчи парторганизаци 20 делегат, Сталинск тата Харьков облаçĕсенчен—18-шар, Днепропетровск облаçĕнчен—15 делегат суйланă.

Ытти союзлă республикăсенчи компартисенчен суйланă чи пысăк делегацисем çаксем пулаççĕ: Казах республикинчен 50 делегат суйласа янă, Грузи республикинчен—38, Белорус республикинчен—33, Узбек республикинчен—30, Азербайджан республикинчен — 26 делегат суйланă.

Çак съездра РСФСР составĕнче çĕнĕрен тунă облаçсен—Арзамас, Балашов, Белгород, Каменск, Камчатка, Липецк, Магадан облаçĕсенчи, Украина ССР-ĕнчи Черкасск облаçĕнчи парторганизацисем суйланă делегацисем пур, вĕсем съездра пирвайхи хут пулаççĕ.

Пирĕн çĕршыври халăхсен туслăхĕ, пролетарилле интернационализм Коммунистсен партийĕн наци политикин çирĕп никĕсĕ пулса тăраççĕ. Съезда суйланă делегатсем хушшинче: вырăссем, украинецсем, белоруссем, узбексем, казахсем, грузинсем, азербайджанецсем, литовецсем, молдавансем, латышсем, киргизсем, таджиксем, армянсем, туркменсем, эстонецсем, карелсем, финсем, тутарсем, пушкăртсем, поляксем, еврейсем, бурятсем, чăвашсем, мордвасем, удмуртсем, осетинсем, комисем, якутсем, марисем тата ытти национальноçсен парти членĕсем пур.

Съездăн нумай нацилĕ составĕ пирĕн государствăри халăхсен çирĕп туслăхне, наци ыйтăвне татса парас ĕçре ленинла политика тунă çитĕнÿсене, парти нацилле кадрсене тăрăшса пăхса ÿстернине кăтартса парать.

Съезда пирĕн партин никĕсĕ пулса тăракан партин пуçламăш организацийĕсен шучĕ çинчен каласа пама кирлĕ тесе шутлатăп. Пуçламăш организацисем пурĕ 350 пин ытла. Промышленноçри пуçламăш парторганизацисен шучĕ 3.870 организаци чухлĕ ÿссе, 43.061 организацие çитнĕ, транспортра 1.946 организаци, строительствăра 1.887 организаци хушăннă, çакă ĕнтĕ парти промышленноçа, транспорта, строительствăна ертсе пырас ĕçе вăйлатнине пĕлтерет.

Паллă ĕнтĕ, XIX съезд иртнĕренпе пирĕн парти ялхуçалăхне хăвăрт çĕклес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттерчĕ. Ялхуçалăхне малалла аталантарас ĕçре халиччен сухаламан тата нумайччен сухаламасăр выртнă çĕрсемпе усă курма тытăнни пысăк ĕçсенчен пĕри пулса тăрать. Коммунистсен партийĕ чĕннипе çĕнĕ çĕрсем çинче ĕçлеме çĕршывăн тĕрлĕ районĕсенчен çĕршер пин ĕçсынни пычĕ. Çĕнĕрен темиçе çĕр совхоз организациленĕ. Çавна пула совхозсенче пуçламăш парторганизацисен шучĕ чылай ÿсрĕ. Казахстанра тата Алтайра кăна совхозсенче çĕнĕрен 338 парторганизаци тунă.

Колхозсенче те пуçламăш парторганизацисен шучĕ ÿсрĕ. XIX съезд тĕлне колхозсенче пуçламăш парторганизацисем 76.355 пулнă пулсан, халĕ вĕсем 80.015 шутланаççĕ, урăхла каласан, 3.660 парторганизаци ытларах. Калас пулать, колхозсенче халĕ парторганизацисем чылай пысăкланчĕç. 1952 çулта колхозсенче 26 коммунистран пуçласа 100 коммунист таран шутланакан парторганизацисем 5.034 кăна пулнă. Хальхи вăхăтра ун пек организацисем ултă пин ытла. Колхозсенче парти членĕсемпе кандидачĕсене çĕр çын ытла пĕрлештерсе тăракан пуçламăш парторганизацисем те пур.

Çакăнпа пĕрлех çапла калас пулать: 7.[illegible] колхозра ку таранччен те парторганизацисем туман, 10.850 колхозра парторганизацисен йышĕ пысăк мар, вĕсем виçĕ коммунистран пуçласа пилĕк коммунист таран пĕрлештерсе тăраççĕ. Вăл çавна пĕлтерет: партин нумай обкомĕсемпе райкомĕсем ялхуçалăх производствинче малта пыракансене, новаторсене, колхоз хресченĕсен чи лайăх çыннисене партие илсе, парти речĕсене ÿстерес тесе куллен тăрăшса ĕçлемеççĕ-ха.

Юлташсем! Пирĕн Правительство, мирлĕ политика тытса пырса, Хĕçпăшаллă Вăйсен составĕн йышне чылай чакарчĕ, 1955 çулта кăна çарпа флотран 640.000 çын демобилизацилерĕ. Çавна пула Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар флотĕнче партин пуçламăш организацийĕсемпе коммунистсен шучĕ чакрĕ. 145 пин коммуниста яхăн çарпа флотран халăх хуçалăхне таврăнчĕç, халĕ вĕсем пултаруллă мирлĕ ĕçпе пурăнаççĕ.

* * *

Юлташсем! Пирĕн Коммунистсен партийĕ Совет Союзĕн политика, хуçалăх тата культура пурнăçĕнче пур çĕрте те ертсе пыракан вăй пулса тăрать. Çакă вăл съезд делегачĕсен составĕнче те лайăх палăрать.

Съезда партипе совет органĕсенчи работниксене, промышленноçра, транспортра, строительствăра, ялхуçалăхĕнче, суту-илÿре ĕçлекен работниксене, çавăн пекех культура работникĕсене, Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар флотĕнчи парторганизацисен представителĕсене суйланă.

Съездра парти работникĕсем 506 çын, совет работникĕсем 177 çын, профсоюз работникĕсем 12 çын тата комсомол работникĕсем 8 çын. Съезда ĕç тăвакан сасăпа суйланă делегатсенчен партин центрти органĕсенче ĕçлекенсем 1,4 процент, парти обкомĕсенче, крайкомĕсенче тата союзлă республикăсенчи компартисен Центральнăй Комитечĕсенче ĕçлекенсем—16,6 процент, партин округ, хула, район комитечĕсенче тата партин пуçламăш организацийĕсенче ĕçлекенсем—19,3 процент.

Партин иртнĕ, XIX съезчĕпе танлаштарсан, ку съездра тÿрех производствăра ĕçлекен делегатсем чылай ытларах. XIX съездра пулнипе танлаштарсан, ку съездра рабочисем 2,7 хут, колхозниксем икĕ хут ытларах. Съезда ĕç тăвакан сасăпа суйланă делегатсен пĕтĕм хисепĕнчен 438 çын тÿрех производствăра ĕçлет, вĕсенчен 251 çын промышленноçра тата транспортра, 187 çын—ялхуçалăхĕнче ĕçлет.

Съезд делегачĕсен пĕтĕм хисепĕнчен 95 çын Социализмла Ĕç Геройĕсем, 60 çын Совет Союзĕн Геройĕсем.

Юлташсем! Пирĕн çĕршывра туса ирттернĕ культурăлла революци ытларах та ытларах хăйĕн ырлăхĕсене парать. Совет государствин нумай йышлă интеллигенци пур. Çавна май съезд делегачĕсен составне вĕренни енчен илсе пăхни питех те кăтартуллă. Ĕç тăвакан сасăпа суйланă 1.355 делегатран 758 çын аслă шкултан вĕренсе тухнă, 116 çын—аслă шкул вĕренсе пĕтереймен, 169 çын—вăтам шкултан вĕренсе тухнă. Çапла вара, съезд делегачĕсем хушшинче аслă шкултан вĕренсе тухнă, аслă шкул вĕренсе пĕтереймен, вăтам шкултан вĕренсе тухнă çынсем 80 процента яхăн шутланаççĕ.

Парти составне вĕренни енчен илсе пăхни те питĕ кăтартуллă. 1956 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне аслă шкултан вĕренсе тухнă парти членĕсемпе парти членĕн кандидачĕсем 801.384 çын. аслă шкул вĕренсе пĕтерейменнисем—256.856 çын пулнă. Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕнче аслă шкултан вĕренсе тухнă тата аслă шкул вĕренсе пĕтереймен парти членĕсемпе парти членĕн кандидачĕсем пурĕ 1.058.240 çын пулнă, вăл партин пĕтĕм составĕн 14,7 проценчĕ пулать. 1952 çулта, КПСС XIX съезчĕ тĕлне, парти речĕсенче аслă шкултан вĕренсе тухнă тата аслă шкул вĕренсе пĕтереймен парти членĕсемпе кандидачĕсем 11,8 процент пулнă. КПСС речĕсенче вăтам шкултан вĕренсе тухнисем 1.593.505 çын, урăхла каласан, парти членĕсемпе кандидачĕсен пĕтĕм составĕн 22,2 проценчĕ шутланаççĕ. Вăтам шкул вĕренсе пĕтерейменнисем 2.127.862 çын, урăхла каласан, 29,7 процент.

Совет Союзĕ пĕлÿсен мĕнпур отраслĕсем тăрăх пысăк квалификациллĕ кадрсем хатĕрлес тĕлĕшпе пĕрремĕш вырăна тухрĕ. Совет интеллигенцийĕ пирĕн çĕршывра наукăна, техникăна малалла аталантарас, социализмла хуçалăха тытса пымалли малта пыракан тухăçлă меслетсене тĕпчесе пĕлес, совет халăхне вĕрентес тата унăн сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе калама çук пысăк ĕç туса тăрать. Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн речĕсенче аслă тата вăтам шкултан вĕренсе тухнă специалистсем 1.877.773 çын тăраççĕ.

Çак цифрăсем пирĕн çĕршывра культура калама çук хăвăртлă аталаннине, парти членĕсен тата пĕтĕм совет халăхĕн культури пĕрмаях ÿссе пынине кăтартса параççĕ. Паллах ĕнтĕ, улттăмĕш пилĕк çуллăх задачисене пурнăça кĕртнине пула совет çыннисен культури тата çÿлерех çĕкленĕ.

(Вĕçĕ 2-мĕш страницăра).

СОВЕТ СОЮЗӖНЧИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙӖН ХХ СЪЕЗЧӖ

КПСС ХХ съезчӗн Мандат комиссийӗ тунӑ доклад

А. Б. АРИСТОВ юлташ доклачӗ

(Пуҫламӑшӗ 1-мӗш страницӑра).

Делегатсен составне парти стажӗ тата делегатсем миҫе ҫулта пулни енчен илсе пӑхсан, ҫакӑ курӑнать: парти организацийӗсем нумайӑшӗ парти вӑйӗсене суйласа илсе вырнаҫтарса тухас тӗлӗшпе хӑйсен практикӑлла ӗҫӗнче ватӑ тата ҫамрӑк кадрсемпе тивӗҫлӗ усӑ курма, ҫӗнӗ работниксене хӑюллӑн пысӑк ӗҫсем пама, ватӑ кадрсене упрама тата вӗсен нумай ҫулхи опычӗпе усӑ курма тӑрӑшаҫҫӗ.

Ӗҫ тӑвакан сасӑпа суйланӑ делегатсен составӗнче пилӗк пайран пӗр пайӗ ытларах (20,3 процент) 40 ҫула ҫитмен ҫынсем, 40 ҫултан пуҫласа 50 ҫула ҫитнисем—55,7 процент, 50 ҫултан иртнисем—24 процент.

Парти съезчӗн делегачӗсенчен пилӗкҫӗр ҫынна яхӑн юлашки ҫулсенче парти, совет тата хуҫалӑх ӗҫӗсенче ответлӑрах вырӑна ӗҫлеме куҫарнӑ ҫынсем.

Пирӗн партипе унӑн Центральнӑй Комитечӗ вӑрттӑн условисенче тата граждан вӑрҫи вӑхӑтӗнче революцилӗ кӗрешӗвӗн йывӑр шкулӗ витӗр тухнӑ кадрсемшӗн уйрӑмах тӑрӑшать, ҫакна пирӗн съезда ватӑ большевиксене-ленинецсене, кӗрешӳре ҫирӗпленнӗ большевикла гвардин мухтавлӑ представителӗсене суйласа яни уҫҫӑн кӑтартса парать! Коммунистсем тата пӗтӗм совет халӑхӗ пирӗн партипе пирӗн халӑхӑн аслӑ революцилле традицийӗсене чыслӑн упраҫҫӗ.

Съездра Октябрьти Социализмла Аслӑ революциччен партие кӗнӗ делегатсем 22 ҫын, 1917—1920 ҫулсенче партие кӗнӗ делегатсем—60 ҫын. Парти стажӗ енчен ытти делегатсен составӗ ҫакӑн пек: 1921—1930 ҫулсенче партие кӗнӗ делегатсем—24,9 процент; 1931—1940 ҫулсенче кӗнисем—34 процент; 1941—1945 ҫулсенче кӗнисем—21,6 процент; 1946 ҫулта тата каярах кӗнисем—13,4 процент.

Съезд делегачӗсен составӗнчи хӗрарӑмсен хисепӗ ҫинчен калаҫса парас пулать. Съезда ӗҫ тӑвакан сасӑпа суйланӑ делегатсем хушшинче 193 хӗрарӑм, урӑхла каласан, мӗнпур делегатсен хисепӗнчен 14,2 процент. КПСС XIX съездӗнче хӗрарӑмсем 12,3 процент, XVIII съездра—9,1 процент пулнӑ. Пуринчен ытла хӗрарӑмсем ҫак организацисен делегачӗсем хушшинче ытларах: Иваново облаҫӗн делегачӗсем хушшинче—41,7 процент, Рязань облаҫӗн делегачӗсем хушшинче—30 процент, Азербайджан тата Тутар республикисен делегачӗсем хушшинче—23-шер процент. Обществӑлла-политикӑлла пурнӑҫпа производство ӗҫӗнче хӗрарӑмсен активлӑхӗ вӑйланнӑ май парти ретӗнче хӗрарӑмсен хисепӗ ӳсрӗ. Нумай хӗрарӑмсем партипе государство аппаратӗнче, промышленноҫпа ялхуҫалӑхӗнче ответлӑ вырӑнсенче ӗҫлеҫҫӗ. Пирӗн партире пурӗ 1.414.456 хӗрарӑм тӑрать. XIX съезд чухнехипе танлаштарсан, партире хӗрарӑмсен хисепӗ 95.488 ҫын, XVIII съезд чухнехипе танлаштарсан—1.080.635 ҫын ӳсрӗ.

Партин хӑшпӗр организацийӗсем хӗрарӑмсене ертсе пыракан ӗҫсем парас тӗлӗшпе сахал ӗҫлеҫҫӗ-ха. Ҫав фактсене ҫакӑнпа кӑна ӑнлантарса пама пулать: Ростов облаҫӗнчи килнӗ делегаци составӗнче ӗҫ тӑвакан сасӑпа суйланӑ 15 делегатран пӗр хӗрарӑм кӑна, ҫав организацире хӗрарӑм-коммунистсем пурӗ 12.748 ҫын шутланаҫҫӗ. Арменири Коммунистсен партийӗн делегацийӗнче 14 делегатран пӗр хӗрарӑм кӑна, Арменири парторганизацире хӗрарӑмсем пурӗ 14.876 ҫын шутланаҫҫӗ.

Юлташсем, Владимир Ильич Ленин ҫапла каланӑ: «Иккӗленмелли ҫук, работницӑсемпе хресчен хӗрарӑмӗсем хушшинче организаторла талантсем, практикӑлла ӗҫе йӗркелеме пӗлекен ҫынсем эпир пӗлсе тӑнинчен нумай хут ытларах...», ҫакӑн ҫинчен Никита Сергеевич Хрущев докладӗнче те лайӑх каланӑ. Ленин кӑтартса панине манма юрамасть.

Канашлакан сасӑпа суйланӑ делегатсен составӗ ҫинчен калаҫса пама ирӗк парӑр.

Съезда канашлакан сасӑпа суйланӑ 81 делегатран парти работникӗсем 19 ҫын, 57 ҫын совет учрежденийӗсемпе обществӑлла организацисенче, промышленноҫра, транспортра, строительствӑра, ялхуҫалӑхӗнче ӗҫлеҫҫӗ. Аслӑ шкултан вӗренсе тухнӑ тата аслӑ шкул вӗренсе пӗтерейменнисем делегатсем 50 ҫын ытла, 10 делегат вӑтам шкултан вӗренсе тухнӑ.

Парти стажӗ енчен канашлакан сасӑпа суйланӑ делегатсен составӗ ҫакӑн пек: партие 1920 ҫулччен кӗнисем—3,6 процент; 1921—1930 ҫулсенче кӗнисем—11,1 процент; 1931—1940 ҫулсенче кӗнисем—24,7 процент; 1941—1945 ҫулсенче кӗнисем—30,9 процент; 1946 ҫулта тата каярах кӗнисем—29,7 процент.

* * *

Юлташсем!

XX съезд делегачӗсен составӗ ҫинчен калакан даннӑйсем ҫакна кӑтартса параҫҫӗ: Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗ тата та ытларах ӳсе ҫирӗпленчӗ, ӗҫсыннисен массисене, государство аппарачӗн мӗнпур сыпӑкӗсене, промышленноҫпа ялхуҫалӑхне ертсе пырас ӗҫре ҫӗнӗ опыт нумай илчӗ, вӑл парти строительствин ленинла принципӗ тӑрӑх хӑйӗн ӗҫне лайӑхлатсах пырать. Парти социализмла хуҫалӑх организаторӗсен нумай йышлӑ кадрӗсене, халӑх хуҫалӑхӗн мӗнпур отраслӗсенче техникӑна малалла аталантарас ӗҫе ертсе пыма пултаракан кадрсене тӑрӑшса пӑхса ӳстерет.

Ҫак съезд парти ретӗсен ҫирӗп пӗрлӗхне, парти вӑйӗсемпе авторитечӗ пӗрмаях ӳсе пынине, унӑн кӗрешӳри пултарулӑхӗ ӳснине, вӑл массӑсене коммунизм строительствин ҫӗнӗ ҫитӗнӳӗсем патне илсе пыма пӗлнине тата хатӗр пулнине уҫҫӑн кӑтартса парать. Марксизм-ленинизмӑн аслӑ идейисем Коммунистсен партийӗпе совет халӑхне ҫӗнӗ ӗҫсем, ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тума хавхалантараҫҫӗ. (Алӑ ҫупаҫҫӗ).

СЪЕЗД ДНЕВНИКӖ

Февралӗн 16-мӗшӗнчи ирхи лару

(Малалли. Пуҫламӑшӗ иртнӗ номерте).

Партилле-организацилле ӗҫе ҫӗнӗ задачӑсен ҫӳлӗшне хӑпартса кирли ҫинчен каласа, Суслов юлташ ҫакна палӑртнӑ: партин XIX съезчӗ пуличчен марксизм-ленинизмӑн ют теорипе практика—уйрӑм ҫынна ытла та пысӑка хурас теорипе практика—партилле ӗҫе чылай пысӑк сиен кӳчӗҫ. Вӗсем халӑх массисен ролӗне парти ролӗне пӗчӗклетсе, коллективлӑ руководствӑна пӗчӗклетсе, партин шалти демократине хавшатса, парти членӗсен активлӑхне, вӗсен пуҫарулӑхӗпе пултарулӑхне пусарса пынӑ, уйрӑм ҫынсен ӗҫне тӗрӗслесе тӑма пӑрахасси, вӗсем ответлӑха сухатасси тата иртӗхме пуҫласси патне илсе пынӑ, критикӑпа самокритикӑна вӑйлатма чӑрмантарнӑ, ыйтусене пӗр енле, хӑшпӗр чухне вара йӑнӑш татса парасси патне те илсе пынӑ.

— Юлашки вӑхӑтра коллективлӑн ертсе пырас принцип мӗнпур сыпӑксенче—Центральнӑй Комитетран пуҫласа пуҫламӑш организацисем таранах — ҫӗнӗрен ӑнӑҫлӑн ҫирӗпленсе пырать,—тенӗ Суслов юлташ.—Ҫакна ӑна критикӑпа самокритика ытларах та ытларах сарӑлса пыни, пысӑк те кирлӗ ыйтусене парти органӗсем чӑннипех коллективлӑн сӳтсе явни тата татса пани кӑтартса парать. Ним иккӗленмесӗрех, тенӗ вӑл, ҫапла калама пулать: партин Центральнӑй Комитечӗнче халӗ ӗнтӗ коллективлӑн ертсе пырас принципа ҫирӗп тытса пыраҫҫӗ.

Идеологилле ӗҫ ҫинчен сӑмах хускатса, Суслов юлташ ҫакна палӑртнӑ: ку ӗҫӗн тӗп ҫитменлӗхӗ вӑл пурнӑҫран чылай уйрӑлса тӑнинче, коммунизм строительствин малта тӑракан пурнӑҫ тӗрӗсленӗ тӗслӗхӗсене пӗтӗмлетме тата массӑсем хушшинче сарма пӗлменнинче, ҫавӑн пекех пире малалла кайма чӑрмантаракан сиенлӗ пулӑмсене хирӗҫ пыракан кӗрешӳре активлӑх ҫитменнинче пулать. Суслов юлташ экономика наукин кая юлса пынине, философире теориллӗ шухӑш пирӗн пурнӑҫӑн хальхи вӑхӑтри чи кирлӗ задачисенчен уйрӑм тӑнине палӑртнӑ. Ҫавна пула, пуринчен малтан, практикӑран уйрӑлса кайнӑ пирки, тенӗ вӑл, хӑшпӗр экономистсемпе философсем хушшинче начетничествӑпа догматизм аталанса сарӑлнӑ. Пирӗн идеологилле ӗҫе ҫӗнӗрен хамӑр парти вуншар ҫулсем хушшинче туса хатӗрленӗ большевикла кӗрешӳ сулӗпе, палӑрнӑ тӗллев патне ӗҫлемелли ҫула малалла ямалла, идеологилле ӗҫе коммунизм ҫӗнтерӗвӗшӗн пыракан кӗрешӗве пӑхӑнтармалла.

А. П. Кириленко юлташ (Свердловск парторганизацийӗ) ҫакӑн ҫинчен каланӑ: КПСС Центральнӑй Комитечӗн отчетлӑ докладӗнче пирӗн партин ӗҫне, вӑл партин XIX съезчӗн решенийӗсене пурнӑҫлас тӗлӗшпе туса пынӑ организаторла тата политикӑлла питӗ пысӑк ӗҫе марксистла-ленинла тӗплӗн тишкӗрсе тухнӑ.

Совет Союзӗ социализмран майӗпен коммунизма куҫса пымалли ҫул ҫинче тунӑ пысӑк ҫитӗнӳсем, умра тӑракан аслӑ задачӑсем совет ҫыннисене чун-чӗререн савӑнтараҫҫӗ, вӗсем хамӑрӑн хӑватлӑ Тӑван ҫӗршыва, пире ҫӗнтерӳсем тума хавхалантарса тата организацилесе пыракан аслӑ та ӑслӑ партие кӑмӑлласа савӑнаҫҫӗ.

Хальхи вӑхӑтра пирӗн Тӑван ҫӗршыв никҫанхинчен те тӗреклӗрех те вӑйлӑрах, тӗнчере революцилле юхӑмӑн ударнӑй бригади пулса тӑракан пирӗн ҫӗршывӑн ролӗ паянхи пек уҫҫӑн палӑрса тӑни халиччен никҫан та пулман-ха. Совет Союзӗн мӗнпур ҫитӗнӗвӗсем вӗсем—Коммунистсен партийӗн аслӑ руководствин результачӗ.

Кириленко юлташ Совет Союзӗн ҫитӗнӗвӗсене Свердловск облаҫӗнчи промышленность тунӑ ҫитӗнӳсенчен тӗслӗхсем илсе кӑтартса панӑ. Сӑмахран, 1955 ҫулта ҫав облаҫра чугун тата хурҫӑ пӗрремӗш пилӗкҫуллӑх пуҫланнӑ вӑхӑтри пирӗн пӗтӗм ҫӗршывра мӗн чухлӗ тунӑ, ҫавӑн чухлӗ шӑратса кӑларнӑ.

Оратор ҫавӑн пекех облаҫри промышленность предприятийӗсем ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсем ҫинчен каланӑ. Планлакан органсемпе СССР Хура металлурги министерствин айӑпне пула хӑшпӗр металлурги предприятийӗсене реконструкцилессипе ҫыхӑнса тӑракан чылай ыйтусене халиччен те татса паман.

Малалла оратор ҫапла каланӑ: республикӑсем тата облаҫсем хушшинчи социализмла ӑмӑрту ҫинчен Кириченко юлташ панӑ сӗнӳ ҫине тимлӗ пӑхмалла. Ҫавӑн пек ӑмӑртӑва организацилеме пулать, вӑл пирӗн ҫӗршывӑн халӑх хуҫалӑхне малалла аталантарас ӗҫри аслӑ задачӑсене пурнӑҫлассишӗн пыракан кӗрешӳре пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулӗччӗ. (ТАСС).

Февралӗн 16-мӗшӗнчи каҫхи лару

Съездӑн каҫхи ларӑвне Н. С. Патоличев юлташ председатель пулса ертсе пынӑ.

Пренире чи малтан В. П. Мжаванадзе (Грузи парторганизацийӗ) тухса каланӑ. Пӗтӗм совет халӑхӗ, коммунистсем те, партире тӑманнисем те, тата наука ҫыннисем те Коммунистсен партийӗн политикине пӗтӗм чун-чӗререн ырлаҫҫӗ тата тӑрӑшса ӗҫленипе активлӑ хӳтӗлеҫҫӗ. Вӗсем ҫакна ӗненсе тӑраҫҫӗ: пирӗн Центральнӑй Комитет малашне те хамӑр ҫӗршывра коммунизм тумалли программӑна ӑнӑҫлӑ пурнӑҫлама пирӗн халӑха ӑслӑн, ӑнӑҫлӑн, хӑюллӑн, ҫине тӑрса тата шанчӑклӑн ертсе пырӗ. Партин XX съездне пухни Грузи халӑхӗн политикӑлла пурнӑҫри тата ӗҫри хастарлӑхне ӳстерчӗ. Грузири ӗҫсыннисем ҫакна кураҫҫӗ: улттӑмӗш пилӗк ҫуллӑх план тӗлӗшпе паракан Директивӑсен проектӗнче парти Совет Союзӗнчи нацилле мӗнпур республикӑсен экономикипе культурине чечеклентерессишӗн тӑрӑшни ҫӗнӗрен яр-уҫҫӑн палӑрса тӑрать.

Мжаванадзе юлташ Грузири ӗҫсыннисен ҫитӗнӗвӗсем ҫинчен каласа панӑ. Ҫапла, сӑмахран, иртнӗ пилӗкҫуллӑхра Грузире пӗтӗм продукцин хисепӗ 73 процент ӳснӗ, промышленноҫӑн 100 ытла предприятине туса, ӗҫлеттерме пуҫланӑ. Анчах партин республикӑри организацийӗсем хӑшпӗр чухне промышленность предприятийӗсене, колхозсене, МТС-сене совхозсене ҫителӗклӗ тарӑн пӗлсе, конкретлӑ та оперативлӑ ертсе пыраймаҫҫӗ-ха. Хрущев юлташ докладра идеологилле ӗҫри пысӑк ҫитменлӗхсене палӑртрӗ, ҫавӑн пек ҫитменлӗхсем Грузири парторганизацире те пур.

Грузири коммунистсем, ӗҫсыннисем Коммунистсен партийӗн пур заданийӗсене те пурнӑҫлама, пирӗн ҫӗршывра коммунизм пӗтӗмпех ҫӗнтертӗр тесе пӗтӗм вӑй-хала тата пӗлӗве парса кӗрешме хатӗр, тет Мжаванадзе юлташ.

Германири Социалистсен пӗрлӗхлӗ партийӗн Центральнӑй Комитечӗн пӗрремӗш секретарьне В. Ульбрихт юлташа сӑмах панӑ. Делегатсем ӑна пӗр харӑс алӑ ҫупса саламласа кӗтсе илнӗ. Вӑл ҫапла каланӑ:

— Хаклӑ юлташсем, хаклӑ тусӑмсем! Германири Социалистсен пӗрлӗхлӗ партийӗн Центральнӑй Комитечӗ нимӗҫ рабочи класӗпе патриотла мӗнпур вӑйсен ячӗпе XX съезда чун-чӗререн тӑванла, боевой салам калать!

Совет Союзӗнчи халӑхсен ӗҫри ҫитӗнӗвӗсем, социализмла тата демократилле государствӑсен лагерӗн ӳсӗмӗн чаплӑ малашлӑхӗсем Германири Социалистсен пӗрлӗхлӗ партине, мире юратакан тата прогрессивлӑ мӗнпур ҫынсене кӗрешӳре хавхалантараҫҫӗ. Демократиллӗ Германи Республикинчи халӑх тата пӗтӗм Германири мире юратакан вӑйсем Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн Центральнӑй Комитетне тата Совет правительствине тӗнчери йывӑр лару-тӑрӑва ҫӑмӑллатас тӗлӗшпе пуҫарулӑх кӑтартнӑшӑн тав тӑваҫҫӗ.

Ульбрихт юлташ Демократиллӗ Германи Республикинчи рабочи класӗн, ӗҫхресченӗсен тата интеллигенцин хӑйсен халӑхӗн ҫӗнӗ государствине туса хурас ӗҫри ҫитӗнӗвӗсем ҫинчен каласа панӑ. Ӗҫсыннисем пуҫарулӑ ӗҫленипе пӗрремӗш пилӗкҫуллӑхра (1951—1955 ҫ. ҫ.) промышленность продукцийӗ туса кӑларасси, вӑрҫӑччэнхи вӑхӑтрипе (1936 ҫ.) танлаштарсан, икӗ хут ӳснӗ. Ҫак тапхӑрта ялхуҫалӑх производстви 144 процент ӳснӗ.

Малалла Ульбрихт юлташ социализмла лагерьти государствӑсем хӑйсен ӗҫри опычӗпе пӗр-пӗрне паллаштарни, экономика енӗпе пӗр-пӗрне пулӑшни тата пӗр-пӗринпе килӗштерсе ӗҫлени усӑллӑ пулни ҫинчен каланӑ.

Ульбрихт юлташ хӑйӗн сӑмахне Германири Социалистсен пӗрлӗхлӗ партийӗн Центральнӑй Комитечӗ КПСС XX съездне янӑ саламлӑ ҫырури сӑмахсемпе вӗҫлет:

«Германипе Совет Союзӗ хушшинчи никам аркатайми тачӑ туслӑх пирӗн халӑхшӑн Германи нацийӗн пурнӑҫлӑ ыйтӑвӗсене татса парасси шанчӑкӗ пулса тӑрать. КПСС XX съездне саламласа, Германири Социалистсен пӗрлӗхлӗ партийӗ Совет Союзӗнчи Коммунистсен партине, Совет правительствине тата совет халӑхне яланах ырӑ кӑмӑлпа пулӑшса пынӑшӑн тав тӑвать. Эпир пӗтӗм чун-чӗререн Совет Союзӗнчи халӑхсене коммунизм строительствинче ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем тума ырӑ сунатпӑр».

Ульбрихт юлташ нимӗҫ халӑхӗпе Совет Союзӗнчи халӑхсем хушшинчи ҫирӗп туслӑх сыв пултӑр, марксистла-ленинла мӗнпур партисем, Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗ ертсе пыракан партисем, пӗрле ҫыхӑнса ӗҫлесси сыв пултӑр тенӗ вӑхӑтра залра тӑвӑллӑн алӑ ҫупнӑ.

Унтан А. И. Микоян юлташ сӑмах тухса каланӑ.

Б. Гафуров юлташ (Таджикистан парторганизацийӗ) Коммунистсен партийӗ XX съезда хӑйӗн Центральнӑй Комитечӗ тавра татах та тачӑрах пӗтӗҫсе кӗтсе илни ҫинчен каланӑ.

Марксизм-ленинизм теорине мӗнле пӑхассинчен те хӳтӗлес ӗҫре Центральнӑй Комитет принциплӑхпа ҫирӗп тытса пынине эпир хӗрӳллӗн саламлатпӑр, тет оратор. Центральнӑй Комитет облаҫсенчи, крайсенчи тата республикӑсенчи партипе совет организацийӗсен ӗҫӗсем пирки лартакан требованисене вӑйлатнипе эпир пурте пӗр шухӑшлӑ пулса ырлатпӑр. Центральнӑй Комитет ертсе пырас ӗҫре коллегиальноҫа ҫирӗп тытса пыни, партин вырӑнти органӗсене кулленхи кун ертсе пырас ӗҫе вӑйлатни, халӑх хуҫалӑхне аталантарас тӗлӗшпе питӗ пысӑк ыйтусене тӗпчесе хатӗрлени халех ӗнтӗ ҫитӗнӳсем тума май панине эпир ҫав тери кӑмӑлласа палӑртатпӑр.

Наци ыйтӑвне питӗ ӑнӑҫлӑ йӗркелени пирӗн партин тава тивӗҫлӗ чи пысӑк ӗҫӗсенчен пӗри пулса тӑрать. Ҫавна пула пирӗн нацилле республикӑсем пурте промышленность, ялхуҫалӑхӗ тата культура тӑтӑшах малалла аталанса пыракан пуян республикӑсем пулса тӑчӗҫ. Нацилле республикӑсене чечеклентерме аслӑ вырӑс халӑхӗ нумай пулӑшрӗ. Ҫавӑн пек пулӑшнӑшӑн пирӗн ҫӗршыври халӑхсем вырӑс халӑхне ӗмӗр-ӗмӗрех тав туса пурӑнӗҫ.

Малалла Гафуров юлташ идеологилле ӗҫе лайӑхлатма кирли ҫинчен каланӑ. Вӑл пропаганда практикӑлла пурнӑҫран уйрӑлса тӑнине палӑртнӑ, писательсене вӗсем хӑйсен произведенийӗсенче совет ҫыннисен чаплӑ ӗҫӗсене тӗплӗн ҫутатманшӑн критикленӗ.

Оратор Таджикистанри парторганизацин ӗҫӗсем ҫинчен каласа панӑ. Республикӑри Коммунистсен партийӗн съезчӗ делегатсене КПСС XX съездӗнче ҫапла шантарса калама хушнӑ: Таджикистанри коммунистсем улттӑмӗш пилӗкҫуллӑхра хуҫалӑхпа культурӑна хӑватлӑн аталантарма пултарӗҫ. Халӗ республикӑра 1960 ҫулта ҫӗр мамӑкӗ кашни гектартан вӑтам шутпа 40 центнер пухса илмелле тӑвассишӗн ӑмӑрту сарӑлнӑ. Ҫӗр мамӑкӗ акӑнакан ҫӗр лаптӑкӗн пысӑкӑшне 1960 ҫул тӗлне 80 процент ӳстермелле, чӗрӗ ҫӗр мамӑкӗ пӗтӗмпе пӗр миллион тонна пухса кӗртмелле.

(ТАСС).

Февралӗн 17-мӗшӗнчи ирхи лару

Февралӗн 17-мӗшӗнчи ирхи ларӑва М. П. Мжаванадзе юлташ председатель пулса ертсе пынӑ. Ларура КПСС Центральнӑй Комитечӗпе Центральнӑй Ревизи Комиссийӗн отчетлӑ докладӗсене малалла сӳтсе явнӑ.

Ҫак кунсенче съезд трибуни ҫинчен партин пысӑк организацийӗсен—Мускавпа Ленинград, Украинӑпа Белорусси, Казахстанпа Узбекистан, Грузипе Азербайджан, Латвипе Свердловск, Горький парторганизацийӗсен, Алтай крайӗнчи парторганизацин тата ытти нумай организацисен представителӗсем тухса каланӑ. Вӗсен сӑмахӗсем пирӗн партин никам ҫӗмӗрейми пӗрлӗхне, вӑл Центральнӑй Комитет тавра тачӑ пӗтӗҫсе тӑнине уҫҫӑн кӑтартса параҫҫӗ. Центральнӑй Комитет ертсе пынипе парти хӑйӗн XIX съезчӗ хыҫҫӑн питӗ пысӑк ӗҫсем туса ирттерни ҫинчен делегатсем тивӗҫлипе савӑнса каланӑ. Вӗсем, пурте пӗр кӑмӑллӑ пулса, ҫакна палӑртнӑ: Центральнӑй Комитетӑн Н. С. Хрущев юлташ туса панӑ отчетлӑ докладӗнче кучухнехи тӗнчери лару-тӑрӑва марксистла-ленинла тишкӗрсе ҫутатса панӑ, пирӗн ҫӗршывра хуҫалӑхпа культура строительствин итогӗсене наукӑлла пӗтӗҫтернӗ, совет халӑхӗн малалла, коммунизм строительстви патне пымалли программине палӑртса хунӑ.

Парти съезчӗн ӗҫне пӗтӗм халӑх хӑйӗн активлӑхне ӳстернипе ҫирӗплетет. Халӑх партин тулашри тата шалти политикине, унӑн тӗп ҫул-йӗрне чун-чӗререн ырласа хӳтӗлет. Совет ҫӗршывӗ ҫинче съезд ячӗпе пуҫланӑ социализмла ӑмӑртӑвӑн ҫӳле ҫӗкленӗ ялавӗсем вӗлкӗшеҫҫӗ. Шахтӑсемпе заводсем, колхозсемпе МТС-сем, ученӑйсен лабораторийӗсемпе совхозсем Коммунистсен тӑван партине ӗҫре ҫитӗнӳсем ҫинчен пӗлтерсе паракан салют пӗтӗм тӗнчене илтӗнет.

Ирхи ларура чи малтан В. М. Суслов юлташа (Краснодар парторганизацийӗ) сӑмах панӑ. Вӑл ҫапла палӑртнӑ: XIX съезд хыҫҫӑн иртнӗ тапхӑрта Коммунистсен партийӗ ертсе пынипе Совет Союзӗнчи халӑхсем Совет государствин вӑй-хӑватне татах та ытларах пысӑклатрӗҫ, унӑн тӗнчери авторитетне татах та ытларах ӳстерчӗҫ; коммунизм обществи тумалли ҫул ҫинче малалла ҫӗнӗ утӑм турӗҫ. Пиллӗкмӗш пилӗк ҫуллӑх плана ӑнӑҫлӑ тата срокчен тултарни партин организаторла ӗҫӗн питӗ пысӑк результачӗ пулса тӑрать.

Хӑйӗн сӑмахӗн чылай пысӑк пайӗнче Суслов юлташ ялхуҫалӑхне малалла вӑйлатас ӗҫ ыйтӑвӗсем ҫинчен каланӑ. КПСС Центральнӑй Комитечӗпе СССР Министрӗсен Совечӗ ялхуҫалӑхне планламалли ҫӗнӗ йӗрке ҫинчен йышӑннӑ постановлени, тенӗ вӑл, ялхуҫалӑх производствине ӳстерес ӗҫре пысӑк вырӑн йышӑнчӗ. Ҫак постановлени пур пек майсемпе тата резервсемпе туллинрех усӑ курма май пачӗ. Ку вӑл, сӑмахран, Кубань тӑрӑхӗнчи хуҫалӑхсен ӗҫӗнчен те курӑнать. Иртнӗ ҫулта Краснодар крайӗнче виҫӗмҫулхинчен 20 процент ытла нумайрах тӗштырӑ пухса кӗртнӗ. Ҫакна ӑна кукуруза акса тӑвакан ҫӗр лаптӑкӗсене чылай пысӑклатнипе тата кукуруза тухӑҫлӑхне ӳстернипе тунӑ. Сахӑр кӑшманӗ, кантӑр, пахча ҫимӗҫ, виноград, аш-какай, ҫӑм тата ытти ялхуҫалӑх продукчӗсем чылай нумайрах туса илнӗ. Колхозсен пайланман фончӗсемпе колхозниксен тупӑшӗсем пысӑкланнӑ. Халӗ ӗнтӗ крайри колхозсем пурте тенӗ пекех—миллионерсем.

Малалла Суслов юлташ ялхуҫалӑхне аталантармалли малашлӑхсем ҫинчен каланӑ. Аш-какай туса илессине кӑҫалах ӗнтӗ, тет вӑл, 1955 ҫулхипе танлаштарсан, икӗ хут ӳстерме пулать; 1957 ҫулта аш-какай туса илесси виҫӗ хут, сӗт суса илесси—икӗ хут, чӑхсенчен ҫӑмарта илесси—4 хут ӳсет. Ҫапла вара улттӑмӗш пилӗкҫуллӑх заданийӗ икӗ ҫул хушшинче пурнӑҫланать.

Малалла М. Торез юлташ тухса каланӑ. Ӑна съезд делегачӗсем ӑшшӑн кӗтсе илнӗ. Вӑл Францири Коммунистсен партийӗн тата Францири ӗҫсыннисен ячӗпе Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн XX съездне хӗрӳллӗ те туслӑ салам каланӑ.

ССР Союзӗн халӑх хуҫалӑхне аталантармалли улттӑмӗш пилӗк ҫуллӑх план тӗлӗшпе паракан Директивӑсен проектне, тенӗ вӑл, пӗтӗм тӗнчери ӗҫсынни массисем, малта пыракан пӗтӗм этемлӗх ҫав тери хавхаланса кӗтсе илчӗҫ. Вӗсем ҫакна кураҫҫӗ: Коммунистсен партийӗ ертсе пынипе совет халӑхӗ ҫутӑ малашлӑх патне, пуриншӗн те пуян, телейлӗ пурнӑҫ патне ҫул хывать. Совет Союзӗн хавхалантаракан примерӗ ҫакна кӑтартса парать: ҫӗршывӑн производительнӑй вӑйӗсене план йӗркипе аталантарса пырасси, ӗҫсыннисен пурнӑҫне тӗпренех лайӑхлатасси, вӗсен материальнӑй пурнӑҫпа культура ыйтӑвӗсене тивӗҫтересси вӑл власть рабочи класс аллине куҫнипе ҫыхӑнса тӑрать.

Совет Союзӗ миршӗн активлӑ кӗрешни ҫинчен сӑмах хускатса, Торез юлташ ҫапла каланӑ: ССР Союзне халӗ Франци халӑхӗ никҫанхинчен те ытларах тав тӑвать, ӑна чун-чӗререн кӑмӑллать. Вӑрҫӑ пулмалла мар тума май пуррине вӑл халӗ никҫанхинчен те ҫирӗпрех шанса тӑрать. Ҫакӑ вӑл социализм лагерӗн тата миршӗн кӗрешекен государствӑсен вӑйӗ ӳссе пынинчен килет.

Торез юлташ ҫакна палӑртать: миршӗн тата хӑйсен ҫӗршывӗн ҫутӑ малашлӑхӗшӗн пыракан кӗрешӳре Францири ӗҫсыннисем рабочи класс кӗрешӗвӗн пӗрлӗхне, социалистсемпе коммунистсем пӗрле кӗрешессине организацилес тӗлӗшпе ывӑнма пӗлмесӗр тӑрӑшаҫҫӗ. Шӑпах рабочи класс ӗҫӗсен пӗрлӗхӗшӗн пыракан кӗрешӳре ӗнтӗ Францири Коммунистсен партийӗ хӑйӗн массӑсем хушшинчи влиянине ӳстерчӗ, январӗн 2-мӗшӗнче пулса иртнӗ парламент суйлавӗнче пысӑк ҫитӗнӳсем турӗ. Ку суйлав, тенӗ оратор, ҫакна кӑтартса пачӗ: Франци халӑхӗ Совет Союзӗ тӗлӗшпе мир политики тытса пырасшӑн, вӑл хӑйне Атлантика блокӗн агрессиллӗ политикине пурнӑҫлас ӗҫе хутшӑнтарма текех ирӗк парас ҫук.

Францири Коммунистсен партийӗ, тенӗ юлашкинчен Торез юлташ, Совет Союзӗнчи Коммунистсен мухтавлӑ партийӗн примерӗпе хавхаланса ӗҫлет. Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн примерне асра тытса, Францири коммунистсем хӑйсен ҫӗршывӗнчи халӑх телейӗшӗн яланах тӑрӑшӗҫ, вӗсем Франци халӑхне хӑйӗн аслӑ революцилле традицийӗсемпе килӗшсе тӑракан малашлӑх туса парассишӗн кӗрешӗҫ.

Унтан П. Тольятти юлташа сӑмах панӑ. Вӑл трибуна ҫине тухсан, делегатсем нумайччен алӑ ҫупнӑ.

Тольятти юлташ КПСС XX съездне Италири Коммунистсен партийӗ ячӗпе, Италири рабочи класс ячӗпе, Итали халӑхӗн демократилле тата прогрессивлӑ пӗтӗм пайӗ ячӗпе хӗрӳллӗ салам каланӑ. Халӗ Италире, пӗтӗм тӗнчери пекех, тенӗ вӑл, коммунистсем ҫеҫ мар, коммунистсен партийӗнче тӑман нумай миллион ӗҫсыннисем те ҫак съезд ҫине тимлӗ пӑхаҫҫӗ, ун ҫинчен нумай шухӑшлаҫҫӗ. Сирӗн ӗҫсем вӗсене ҫирӗп шанчӑк параҫҫӗ, тенӗ Тольятти юлташ. Вӗсем ҫакна лайӑх пӗлеҫҫӗ: эсир йышӑнакан решенисем ӗҫсыннисене капитализм эксплуатацийӗн пусмӑрӗнчен ирӗке кӑларас аслӑ ӗҫ ҫӗнтермелле, демократипе мир ӗҫӗ ҫӗнтермелле тӑвассишӗн тӑрӑшнӑ ҫӗрте сирӗн аслӑ парти ҫӗнӗ пысӑк вӑй хушнине пӗлтерессӗ.

Малалла Тольятти юлташ ҫакна палӑртнӑ: съезд делегачӗсем хӑйсем умӗнче тӑракан ыйтусене мӗнле сӳтсе явни, вӗсем ӗҫри ҫитменлӗхсене хӑюллӑн критиклени чӑн-чӑн демократизм тӗслӗхӗ пулса тӑрать, кунта халӑх интересӗсене пуринчен те пысӑкрах вырӑна хураҫҫӗ.

Эпир яланах, тенӗ оратор, марксизм-ленинизм вӗрентӗвӗшӗн ҫирӗп тӑма, халӑхпа, фабрикӑсенчи, уй-хирсенчи, учрежденисенчи, шкулсенчи ӗҫсыннисемпе тачӑ ҫыхӑнса тӑма тӑрӑшрӑмӑр. Шӑпах ҫакӑ ӗнтӗ пире 20 ҫула яхӑн вӑрттӑн ӗҫлесе пурӑннӑ хыҫҫӑн, партизанла кӗрешӳре икӗ ҫул хушши ирттернӗ хыҫҫӑн хӑватлӑ парти, рабочисем, хресченсем хушшинче, халӑх хушшинче тарӑн тымар янӑ парти туса хума май пачӗ.

Тольятти юлташ ҫапла каланӑ: Италири рабочи класс хӑйӗн пӗрлӗхне ҫирӗплетес ӗҫре пысӑк ҫитӗнӳсем турӗ, ҫакӑ вӑл, пуринчен малтан, коммунистсен партийӗпе социалистсен партийӗ пӗр-пӗринпе тӑванла килӗштерсе ӗҫленинче палӑрса тӑрать.

Хӑйӗн сӑмахне вӗҫлесе Тольятти юлташ ҫапла каланӑ:

— Сакӑнта, съездра, эпир хамӑрӑн ӗҫе, социализм ӗҫне нимӗнле вӑй та ҫӗнтерес ҫуккине ҫӗнӗ вӑйпа туйса илтӗмӗр. Ҫак шанчӑкпа эпир хамӑрӑн рабочисене, хресченсене, культура деятелӗсене, тӗнчере лайӑхрах пурнӑҫ тӑвас текен мӗнпур простой ҫынсене хавхалантарса ҫӗклӗпӗр. Вӗсене эпир тӗнчери лайӑхрах пурнӑҫшӑн кӗрешме ертсе пырӑпӑр, эпир социализм ялавӗ айӗнче пӗрлешсе пӗтӗҫсекен ӗҫсыннисен речӗсене вӑйлатӑпӑр.

А. Ю. Снечкус юлташ (Литва парторганизацийӗ) ҫапла калать: халӗ КПСС Центральнӑй Комитечӗн отчетлӑ докладӗн тарӑн шухӑшӗсем Советлӑ Литвари мӗнпур хуласемпе ялсене сарӑлаҫҫӗ. Аслӑ вырӑс халӑхӗпе, Совет Союзӗнчи мӗнпур халӑхсемпе тачӑ ҫыхӑнса ӗҫлесе, Литва халӑхӗ хӑйӗн хуҫалӑхӗпе культурине аталантарас ӗҫре пысӑк ҫитӗнӳсем турӗ. Снечкус юлташ Литва промышленноҫӗн ҫитӗнӗвӗсем ҫинчен, ялхуҫалӑхӗ мӗнле аталанса пыни ҫинчен, улттӑмӗш пилӗкҫуллӑх планӗсене пурнӑҫлама пысӑк майсем пурри ҫинчен каласа панӑ.

— Отчетлӑ тапхӑрта,— тенӗ малалла оратор,— КПСС Центральнӑй Комитечӗ йышӑннӑ решенисенче идеологи ыйтӑвӗсем, ӗҫсыннисене коммунизмла воспитани парас, хамӑрӑн кадрсене марксистла-ленинла ӗҫлеме вӗрентес ӗҫ ыйтӑвӗсем анлӑн палӑрчӗҫ. Литвари парторганизацисем ӗҫсыннисене коммунизмла воспитани парас тӗлӗшпе пысӑк ӗҫ туса пыраҫҫӗ. Анчах та ҫакӑ вӑл идеологилле ӗҫе вӑйсӑрлатма юранине пӗлтермест.

Снечкус юлташ Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн наци политикин аслӑ принципӗсем ҫӗнтерни ҫинчен каланӑ. Аслӑ Совет Союзӗн составӗнче Литва халӑхӗ чӑн-чӑн государственность илчӗ, никама та пӑхӑнмасӑр пурӑнакан халӑх пулса тӑчӗ. Оратор Эйзенхауэрпа Иден Вашингтонра йышӑннӑ элеклӗ деклараци ҫинчен аса илнӗ, вӗсене капитализм пусмӑрӗнчен ирӗке тухнӑ халӑхсем никама пӑхӑнмасӑр пурӑнни канӑҫ памасть, тенӗ.

—Хӑй вӑхӑтӗнче шӑпах Хӗвеланӑҫӗнчи империалистсем ӗнтӗ,—тенӗ Снечкус юлташ,—Литва халӑхӗ, Литва государстви никама пӑхӑнмасӑр пурӑнасси ҫинчен илтесшӗн те марччӗ. Ҫакна ӑна Литва халӑхӗ манман тата никҫан та манас ҫук. 1919 ҫулта империалистсем Литвари совет властьне юн ӑшне путарчӗҫ, каярахпа империалистсем гитлеровецсене хӗспӑшаллантарчӗҫ, гитлеровецсем вара Литва хулисемпе ялӗсене ҫунтара-ҫунтара ячӗҫ, нумай пин литовецсене вӗлерчӗҫ.

Литва халӑхӗ аслӑ Тӑван ҫӗршывӑн—Советлӑ Социализмла Республикӑсен Союзӗшӗн ҫирӗп тӑрать. Ҫакӑ вӑл—унӑн телейӗпе ӳсӗмӗн ҫӑлкуҫӗ. Империалистсем Литвана шӑпах ҫакӑншӑн хурланине Литва халӑхӗ лайӑх пӗлет.

Унтан Ф. Е. Титов юлташа (Иваново парторганизацийӗ) сӑмах панӑ.

—XIX съезд пулнӑранпа виҫӗ ҫул ытларах кӑна иртрӗ-ха,—тенӗ вӑл,—анчах та ҫак историлле кӗске срокра Коммунистсен партийӗпе унӑн Центральнӑй Комитечӗн хавхалантарса пыракан питӗ пысӑк вӑйӗ ҫӗнӗрен те ҫӗнӗрен, ҫав тери уҫҫӑн палӑрчӗ. Аслӑ Ленин кӑтартса панӑ ҫулпа шанчӑклӑн пырса, партин Центральнӑй Комитечӗ пирӗн ҫӗршыва, пӗтӗм хуҫалӑхпа культура строительствине ӑслӑн, малашнехине курса тӑрса ертсе пычӗ, Совет государствин тӗнчери авторитетне малалла ӳстерчӗ.

Малалла Титов юлташ Иваново облаҫӗнчи парторганизаци промышленноҫа, уйрӑмах облаҫра тӗп отрасль пулса тӑракан пир-авӑр промышленноҫне ертсе пырас тӗлӗшпе мӗнле ӗҫлени ҫинчен тӗплӗн каласа панӑ. Иваново облаҫӗ, тенӗ вӑл, пирӗн ҫӗршывра туса кӑларакан пӗтӗм ҫӗр мамӑк пир-авӑрӗпе штапель пир-авӑрӗн 30 процентне яхӑн парса тӑрать. Ҫавӑнпа та ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерес, оборудованине ҫӗнетсе лайӑхлатса хальхи производство лаптӑкӗсем ҫинчех пир-авӑр нумайрах туса кӑларассине, продукци ассортиментне чылай пысӑклатассине, продукци пахалӑхне лайӑхлатассине тата унӑн хӑйне ларакан хакне йӳнетессине облаҫри парторганизаци хӑйӗн тӗп задачи тесе шутлать.

Облаҫри промышленность ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсем ҫинчен сӑмах хускатса, оратор ҫакна палӑртнӑ: нумай парторганизацисем производство экономикине тӗплӗн сӑваса пӗлмен, организаторла тата политикӑлла ӗҫе кирлӗ пек лайӑх туса пыман, коллективсене производство резервӗсемпе лайӑхрах усӑ курассишӗн кӗрешме начар мобилизациленӗ. Титов юлташ СССР Пир-авӑр промышленность министерствипе РСФСР Пир-авӑр промышленность министерстви предприятисене ҫӗнӗ оборудовани ҫителӗксӗр парса тӑни ҫинчен, вӗсен чӗртавар тӑратас ӗҫри кӑлтӑкӗсем ҫинчен, вӗсем фабрикӑсенчи транспорта тата йывӑр ӗҫ процесӗсене механизацилес ыйтусене ҫителӗксӗр татса пани ҫинчен каланӑ.

Партин XIX съезчӗ хыҫҫӑн, тенӗ Н. Н. Органов юлташ (Красноярск парторганизацийӗ), коммунизм строительствин пур участокӗсенче те питӗ пысӑк ҫитӗнӳсем тунӑ. Чи пысӑк та кирлӗ ыйтусене татса панӑ чухне Центральнӑй Комитетпа унӑн Президиумӗ, Совет правительстви яланах ӗҫсыннисен йышлӑ массисемпе канашлаҫҫӗ. Ҫакӑ вӑл партипе массӑсем хушшинчи ҫыхӑнусене, партипе халӑхӑн никам ҫӗмӗрейми пӗрлӗхне татах та ытларах ҫирӗплетет.

Органов юлташ коммунизм строительствинчи ҫитӗнӳсене Красноярск крайӗн примерӗсемпе кӑтартса панӑ. Крайра тӗслӗ металлурги, хими промышленноҫне ҫӗнӗрен туса хунӑ, машиностроени, ҫӗр кӑмрӑк тата вӑрман промышленноҫӗ ӳссе пырать. Хуҫалӑхпа культура ӳсӗмӗн ҫӗнӗ пилӗкҫуллӑхри малашлӑхӗсем татах та ытларах хаваслантараҫҫӗ. Калама ҫук пысӑк Красноярск гидроэлектростанцине, алюмини комбинатне тумашкӑн хатӗрленме тытӑннӑ, нефть тасатакан комбинат тата ытти пысӑк предприятисем лартма палӑртнӑ.

(Вӗҫӗ 3-мӗш страницӑра).

СОВЕТ СОЮЗĔНЧИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙĔН XX СЪЕЗЧĔ

СЪЕЗД ДНЕВНИКĔ

(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 2-мĕш страницăра).

Н. С. Хрущев докладĕнче пирĕн çĕршывăн хĕвелтухăç пайĕнче виççĕмĕш металлурги бази тăвасси çинчен каланă. Çапла туни вăл пирĕн Тăван çĕршывăн экономикăпа оборăна хăватне малалла ӳстерес ĕçĕн тĕп ыйтăвĕсене ăслăн татса панине кăтартакан чаплă тĕслĕх пулса тăрать. Парти хăюллăн палăртса хунă çак ĕçсене совет халăхĕ пĕр кăмăллă пулса ырлать, вĕсене пурнăçлама вăй-хала шеллемесĕр тăрăшса ĕçлĕ.

Парти хĕвелтухăçĕнчи хуçалăха аталантарса вăйлатас тĕлĕшпе лартнă çĕнĕ задачăсем чылай министерствăсене çак районсен нушисем çине уйрăмах тимлĕ пăхма хушаççĕ. Оратор Вăрман промышленность министерстви вăрман касса хатĕрлес ĕçĕн материальнă-техникăлла никĕсне туса хурас ĕç çине кирлĕ пек тимлĕ пăхманни çинчен калать. Аслă шкулсен министерстви инженерла кадрсен хăшпĕр категорийĕсене вĕрентсе хатĕрлессипе, çав шутра Çĕпĕрти лесотехнически аслă шкулсемпе факультетсене пысăклатассипе, политехнически çĕнĕ институтсем тăвассипе çыхăнса тăракан ыйтусене вăраххăн татса парать.

А. Н. Несмеянов юлташ (Мускав парторганизацийĕ) хăйĕн сăмахĕнче наука задачисем çинчен каланă.

Партипе правительство, тенĕ вăл, наукăна малалла аталантарас, унăн материальнăй никĕсне çирĕплетес тĕлĕшпе нумай ĕçсем турĕç. Наукăпа тĕпчев ĕçĕсен чи лайăх пуянлатнă çĕнĕ институчĕсем, çав шутра ядернăй проблемăсен институчĕ, Наука академийĕн электрофизически лабораторийĕ тата ытти институтсем туса хунă. Наука кадрĕсен йышĕ лайăх вĕрентсе хатĕрленĕ çамрăксен шучĕпе нумай ӳсрĕ.

Атом энергине тĕпчесе пĕлес тата ăна мирлĕн усă курас ĕçре тунă çитĕнӳсем совет наукин пысăк çĕнтерĕвĕ пулса тăраççĕ. Атом энергетикипе халĕ сăнавсем тума кăна усă кураççĕ-ха. Çапла пулсан та улттăмĕш пилĕкçуллăхрах ĕнтĕ атом энергетикин хăвачĕ патша Российинче пулнă мĕнпур электростанцисен хăватĕнчен икĕ хут ытла пысăкрах пулать.

Пирĕн умра термоядернăй реакцисене хамăра кирлĕ пек йĕркелесе пыма вĕренсе çитес задача тăрать. Çак задачăна пурнăçласан, водородлă бомбăра пулса иртекен реакцисемпе тата çавнашкал ытти реакцисемпе мирлĕ ĕçсенче усă курмалла тума май килĕ тесе шанса тăма пулать. Халăх хуçалăхĕн тĕрлĕ отраслĕсенче изотопсемпе мĕнле усă курмаллине тĕпчесе пĕлес ĕç анăçлă пырать. Сурма проводниксен термоэлектрически уйрăмлăхĕсене юлашки вăхăтра тĕпчесе пĕлни çакна шанса тăма май парать: пушхирсенчи çутă ăшăпа çутăран, тӳррĕнех электроэнерги тума тытăнас вăхăт çитесси аякра мар ĕнтĕ. Хăвăрт шутлакан электронлă устройствăсем тата çавăн йышши чи хăвăрт ĕçлекен машина конструкцине тăвас ĕçре Наука академийĕ паха пуçару кăтартрĕ. Наука академийĕн цифра машини шут шутлакан темиçе пин çын чухлĕ ĕç тăвать, халиччен шутласа кăларма май пулман задачăсене шутласа кăларать. Электронлă машинăсем пулăшнипе пĕр чĕлхерен тепĕр чĕлхе çине автоматла куçарас задачăна пурнăçлас ĕçре те малтанхи утăмсем тунă ĕнтĕ.

Несмеянов юлташ химиксен юлашки вăхăтри ĕçĕсем çинчен, геологсен çĕнĕ открытийĕсем çинчен, халăх хуçалăхĕн пысăк та кирлĕ ыйтăвĕсене татса парас ĕçре наука мĕнле вырăн йышăнса тăни çинчен каланă.

Наука академийĕн тĕп задачи, тесе кăтартса панă оратор, çутçанталăкпа обществăн çĕнĕ явленийĕсене тупассинче тата вĕсене тĕпчесе пĕлессинче пулмалла. Улттăмĕш пилĕкçуллăхра теорилле ĕçе, пуринчен малтан наукăсен физикăлла-математикăлла, химилле, биологилле комплексĕсене вăйлăн аталантарма тытăнмалла. Вĕсем çĕнĕ техникăпа производствăн халиччен тĕпчесе пĕлмен малашлăхĕсем патне илсе пыракан çула çутатса пама тивĕçлĕ.

А. И. Струве юлташ (Молотов облаçĕнчи парторганизаци) çакна палăртнă: КПСС Центральнăй Комитечĕн отчетлă докладĕнче, пирĕн çĕршывăн тĕнчери тата шалти лару-тăрăвне марксистла-ленинла тĕплĕн тишкĕрсе тухнă, Центральнăй Комитетпа Совет правительстви халăх хуçалăхĕнче çывăхри çулсенче пурнăçлама лартнă пысăк задачăсене теори енĕпе тĕплĕн никĕсленĕ. КПСС Центральнăй Комитечĕ Ленин çулĕпе пĕр пăрăнмасăр пынине ĕнентерӳллĕн кăтартса панă. Струве юлташ Центральнăй Комитет хăйĕн Пленумĕсен ĕçне партин вырăнти ертсе пыракан работникĕсене, советпа хуçалăх работникĕсене анлăн хутшăнтарнине ырланă.

Молотов облаçĕнчи парторганизаци ĕçĕ çинчен сăмах хускатса, оратор çак область иртнĕ пилĕкçуллăхра тунă хăшпĕр çитĕнӳсене палăртнă. КПСС Центральнăй Комитечĕн январьти Пленумĕ хыççăн ял хуçалăхне вăйлатса лайăхлатмалли çул çинче малтанхи утăмсем тунă. Промышленность производство планĕсене çулсеренех иртерсе тултарать. Анчах пысăк çитменлĕхсем те сахал мар-ха. Предприятисемпе стройкăсенче çĕнĕ техникăна, малта тăракан технологие ĕçе вăраххăн кĕртсе пыраççĕ, ĕç тухăçлăхне ӳстерессишĕн начар кĕрешеççĕ, социализмла ăмăртăва ертсе пырас ĕçре пысăк çитменлĕхсем пур.

Малалла Струве юлташ çакна палăртнă: Молотов облаçĕн хăшпĕр йышши чи кирлĕ продукци туса кăларас ĕçе партин XX съезчĕ улттăмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе паракан Директивăсен проектĕнче палăртса хунинчен чылай хăвăртрах аталантарма майсем пур. Оратор Тĕслĕ металлурги министерстви, Металлургипе хими промышленность предприятийĕсем тăвакан министерство тата Хими промышленность министерстви промышленноçăн чи кирлĕ отраслĕсене аталантарас ĕçре начар пулăшни çинчен каланă.

Г. А. Денисов юлташ (Саратов парторганизацийĕ) çапла каланă: хальхи вăхăтра пирĕн партин шалти пурнăçĕ уйрăмах пысăк та витĕмлĕ ĕçсемпе палăрса тăрать. Çакна ăна, тенĕ вăл, пуринчен малтан, Центральнăй Комитет партин шалти демократине аталантарас, парти массисен активлăхне ӳстерес, парти пурнăçĕн нормисене тата парти руководствин аслă Ленин туса хатĕрленĕ принципĕсене тĕрĕс пурнăçлас тĕлĕшпе çирĕп çул-йĕр тытса пынипе тунă.

Хăйĕн сăмахĕнче Денисов юлташ областри промышленность ĕçĕ çинчен нумай каланă. Область промышленноçĕ туса кăларакан продукци хисепĕ иртнĕ пилĕкçуллăхра, 1950 çулхипе танлаштарсан, икĕ хута яхăн ӳснĕ. Оратор çакна палăртнă: электроэнерги çителĕклĕ марри область промышленноçне вăйлатма чылай чăрмантарать. Çакна май вăл Саратовра иккĕмĕш теплоэлектроцентраль тумалли срокĕсене кĕскетме тата Куйбышев гидроэлектростанцийĕнчен Саратова вăйлă энерги памалли электропередача линийĕ тума кирли çинчен каланă.

А. А. Сурков юлташ (Мускав парторганизацийĕ) совет литературине малалла аталантарас ыйтусем çинче чарăнса тăнă. Вăл совет çыннисен культура тĕлĕшĕнчи ыйтăвĕсене тивĕçтерес, ĕççыннисене коммунизмла воспитани парас ĕçре партие пулăшса пыма тивĕçлĕ культура деятелĕсем умĕнче тăракан пысăк ĕçсем çинчен каланă.

Пирĕн литературăна искусство, тенĕ Сурков юлташ, содержани пуянлăхĕпе çеç мар, художество вăйĕ тата ăсталăх тĕлĕшĕнчен те чи лайăх пулмалла. Совет писателĕсем хăйсен творчествине халăхпа татах та тачăрах çыхăнтарма, унăн пурнăçне пур енчен те лайăх пĕлме тивĕçлĕ. Парти тата унăн Центральнăй Комитечĕ пулăшнипе эпир хамăрăн ĕçри çитменлĕхсене пĕтерĕпĕр, хамăрăн литературăна коммунизм строителĕсене тивĕçлĕ литература туса хурăпăр.

Румынири рабочисен партийĕ, рабочи класс тата пĕтĕм румын халăхĕ ячĕпе съезда **Георгиу-Деж** юлташ саламланă. Ăна делегатсем ăшшăн кĕтсе илнĕ. КПСС Центральнăй Комитечĕн отчетлă докладĕнче, тенĕ вăл, эпир пурăнакан самана вăрçăсем пулмалла мар тумалли, тĕрлĕ социальнăй системăллă государствăсем пĕр-пĕрипе мирлĕ пурăнмалли майсем тĕлĕшпе, тĕрлĕрен çĕршывсем капитализмран социализма куçса пынин формисем тĕлĕшпе тунă теорилле положенисемпе практикăлла выводсем пурте мире сыхласа хăварассишĕн, социальнăй прогрессăн пыракан кĕрешӳре çав тери пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

Совет Союзĕ шалти тата тулашри политика енĕпе тунă аслă çĕнтерӳсенче социализмлă çĕршывсенчи халăхсем пĕтĕм социализм лагерĕн экономика хăвачĕ ӳснине, çак лагерьти çĕршывсем пĕр-пĕрне тăванла пулăшса ĕçлесси вăйланса пынине кураççĕ.

Малалла Георгиу-Деж юлташ çапла каланă: халăх демократиллĕ строй пуçланнăранпа Румынири ĕççыннисем социализмăн экономикăлла никĕсĕсене хывас ĕçре татăклă çитĕнӳ турĕç. Румынири рабочисен партийĕн иртнĕ çулхи декабрьте пулса иртнĕ съезчĕ социализмла экономикăпа малалла татти сыппиçĕр аталантарса пырас, ялхуçалăхне социализмла урăхлатса çĕнетес задача лартрĕ.

Румын халăхĕпе совет халăхĕ хушшинчи туслăха, Румыни халăхĕпе социализм лагерĕнчи мĕнпур халăхсем хушшинчи туслăха Румыни халăхĕ нимĕрен те хаклă пуянлăха сыхланă пекех упрать. Парти çак туслăха аталантарса, ыйăхма пĕлмесĕр çирĕплетсе пырать. Вăл ĕççыннисене пролетарилле интернационализм шухăшлă пулма, мир, демократи тата социализм лагерьне малалла тĕреклетес ĕçе активлă хутшăнас шухăшлă пулма воспитани парать.

Георгиу-Деж юлташ Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XX съездне анăçлă ĕçлеме чун-чĕререн ырă сунать, Совет Союзĕнчи Коммунистсен партине чысласа, мирĕн, демократи тата социализмăн хăватлă лагерьне чысласа, румын халăхĕпе совет халăхĕ хушшинчи ĕмĕрлĕх туслăха, вĕсем пĕр-пĕрне тăванла пулăшса ĕçленине чысласа саламланă.

Февралĕн 17-мĕшĕнчи каçхи лару

КПСС XX съезчĕн февралĕн 17-мĕшĕнчи каçхи ларăвне **Я. З. Калнберзин** юлташ председатель пулса ертсе пынă.

КПСС Центральнăй Комитечĕпе Центральнăй Ревизи Комиссийĕн отчетлă докладĕсем тăрăх тухса каласа, **И. Р. Раззаков** юлташ (Киргиз ССР-ĕнчи парторганизаци) çакна палăртнă: Н. С. Хрущев юлташăн докладĕнче пирĕн парти политика, экономика тата культура енĕпе пултаруллăн кĕрешсе тунă пысăк ĕçсен итогне палăртнă, çĕршыва малалла аталантармалли майсене кăтартса панă. Политикăпа экономика енĕпе юлашки çулсенче тунă пысăк ĕçсем социализмла строя тĕреклетрĕç, Совет государствин хăватне ӳстерчĕç, халăхăн политикăлла активлăхне вăйлатрĕç, пирĕн çĕршыври рабочи класпа хресченсен союзне, халăхсен тăванла туслăхне çирĕплетрĕç.

Раззаков юлташ çапла каланă: партин Центральнăй Комитечĕ, массăсем хушшинче организаторла ĕçе тимлĕн туса пынин тĕслĕхне кăтартса, пур парторганизацисене те ертсе пырас ĕçĕн шайне ӳстерме хушать. Киргиз республикинчи парторганизаци хăйĕн ĕçне лайăхлатрĕ, анчах халĕ те организацилле ĕçри çитменлĕхсене тата вăйсăрлăха пĕтерме пултараймарĕ-ха, тенĕ Раззаков юлташ. Республикăра промышленноçпа ялхуçалăх продукцийĕ туса хатĕрлессине хăвăрт ӳстермелли пысăк майсемпе халĕ те çителĕксĕр усă кураççĕ.

Улттăмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе паракан Директивăсен проектĕнче советлă мĕнпур республикăсен хуçалăхне татах та пысăкрах хăвăртлăхпа аталантарма палăртнă, тенĕ малалла оратор. Партин Центральнăй Комитечĕпе Совет правительстви союзлă республикăсен ыйтăвĕсемпе нушисем çине ленинла тимлĕ пăхаççĕ. Республикăсен хуçалăх ыйтăвĕсем енĕпе ĕçлеме Национальноçсен Совечĕн Экономика комиссине туса хуни çинчен Хрущев юлташ хăйĕн докладĕнче каласа пачĕ, çавăн пек орган туни, паллах ĕнтĕ, пысăк усă пама пултарать.

Трибуна çине **В. Червенков** юлташ тухнă. Ăна съезд делегачĕсем ăшă кăмăлпа кĕтсе илнĕ. Вăл Болгарири Коммунистсен партийĕ тата Болгарин пĕтĕм халăхĕ ячĕпе XX съезда, Совет Союзĕнчи коммунистсене, паттăр совет халăхне тăванла хĕрӳллĕ салам каланă.

— Совет Союзĕ юлашки çулсенче тулашри политика енĕпе те, шалти политика енĕпе те пĕтĕм тĕнче историйĕнче палăрса тăракан çитĕнӳсем турĕ, çак çитĕнӳсемшĕн пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисемпе пĕрле Болгари халăхĕ те пĕтĕм чун-чĕререн савăнать,—тенĕ В. Червенков. Пирĕн парти пĕтĕм тĕнчери рабочи класпа халăхăн аслă учителĕ—Владимир Ильич Ленин организациленĕ партирен, тĕнчери чи хăватлă та чи ăслă партирен вĕренсе пычĕ, халĕ те вĕренсе пырать тата малашне те вĕренсе пырĕ.

Болгарири Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ,—тенĕ Червенков юлташ,—пире, унăн съезда килнĕ представителĕсене, çак трибуна çинчен пирĕн партин, пирĕн пĕтĕм халăх Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕпе тата совет халăхĕсемпе пĕтĕмпех пĕр шухăш-кăмăллă пулни çинчен, вĕсене коммунизм патне пымалли çула хăюллăн хывнăшăн, чаплă пример кăтартнăшăн, ырă кăмăлпа пулăшнăшăн, вĕсем пĕтĕм этемлĕхĕн мирпе прогресс интересĕсемшĕн халиччен тунă тата халĕ туса пыракан мĕнпур ĕçсемшĕн чун-чĕререн тав туни тата юратни çинчен каласа пама хушрĕ.

Нумаях пулмасть Совет правительстви Болгари халăхне çĕнĕрен питĕ пысăк пулăшу пачĕ, çавăншăн Болгари халăхĕ сире, халĕ юлташсемпе тусăмăрсем, чун-чĕререн тав тăватпăр. Совет правительстви, туслă пурăнас тата экономика тĕлĕшĕнчен тачă çыхăнса ĕçлес принципсене тытса пырса, Болгари Халăх Республикине тракторсем, комбайнсем, виндроуэрсем тата ытти ялхуçалăх машинисем туянма, çавăн пекех оборудованишĕн, проектсемшĕн тата азотпа тук завочĕпе суперфосфат заводне лартас ĕçре техникăлла пулăшу панăшăн тӳлеме нумай вăхăтлăх срока 370 миллион тенкĕ кивçен укçа пачĕ. Çак пулăшу пире ялхуçалăхне механизацилессине хăвăртлатма, унăн аталанăвне çĕнĕ пусăма хăпартма, ялхуçалăх культурисен тухăçлăхĕпе выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне чылай ӳстерме май парать.

Çак съезд ленинла шухăшпа ĕçленипе, съезд Совет Союзĕпе социализмла пĕтĕм лагерĕн тĕнчери тата шалти лару-тăрăвне тишкерсе тухнипе тунă выводсемпе хавхаланса, эпир, Болгарири коммунистсем, хамăр ĕçе ывăнма пĕлмесĕр лайăхлатса пыма, социализм строительствине ертсе пырас ĕçĕн шайне ӳстерме пĕтĕм вăя хурса тăрăшăпăр, çапла туса Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн нумай енлĕ питĕ пысăк опычĕпе творчествăлла усă курăпăр, марксизм-ленинизмăн пурне те çĕнтерсе пыракан вĕрентĕвĕ тăрăх ĕçлесе пырăпăр.

Унтан Венгрири ĕççыннисен партийĕпе Венгри халăхĕ ячĕпе **М. Ракоши** юлташ саламлă сăмах каланă. Залри çынсем ăна нумайччен алă çупса кĕтсе илнĕ.

— КПСС XX съезчĕн ĕçĕпе халĕ прогрессивлă пĕтĕм этемлĕх нипрен ытларах интересленет,—тенĕ М. Ракоши юлташ.— Съезд ĕçне Венгри халăхĕ те тимлĕн сăнаса тăрать. Венгрири ĕççыннисен партийĕпе Венгри халăхĕ çакна ĕненсе тăраççĕ: Совет Союзĕнчи халăхсем хăйсен Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе улттăмĕш пилĕк çуллăх планра палăртнă питĕ пысăк ĕçсене пурне те пурнăçа кĕртĕç. Çак плана пурнăçлани мире сыхлас тĕлĕшпе тумалли аслă ĕçе калама çук хаклă вăй хуни пулать. Çак съезд пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисене çĕнĕ вăй-хăват парать, çĕнĕ пурнăç тăвакан халăхсене, хăйсен ирĕклĕхĕшĕн кĕрешекен халăхсене питĕ чаплă опытпа пуянлатать.

Совет Союзĕ халăхсене ирĕке кăларассишĕн çĕнтерӳллĕн кĕрешнипе Венгри ирĕклĕхпе никама пăхăнманлăх пачĕ,—тенĕ Ракоши юлташ.—Ĕмĕр-ĕмĕрхи чураллăх хыççăн Венгри халăхĕ, халĕ ĕнтĕ, ирĕклĕн ĕçлеме пултарать, вăл хăйĕн телейĕшĕн, лайăх малашлăхшăн кĕрешет. Çавăнпа та Венгри халăхĕ Совет Союзĕнчи халăхсемпе Совет Союзĕнчи Коммунистсен мухтавлă партине кăмăлласа тав тăвать тата юратать.

Венгрири ĕççыннисем халĕ хăйсен иккĕмĕш пилĕк çуллăх планне пурнăçлама тытăнчĕç. Çак пилĕкçуллăх вăхăтĕнче те социализмла индустриализацилес политика тытса пыратпăр, социализмăн экономикăри çирĕп никĕсне хыватпăр.

Ракоши юлташ юлашкинчен çапла каланă:

— Марксизм-ленинизмăн идейисен ялавĕ айĕнче иртекен КПСС XX съезчĕ Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн çирĕп пĕрлĕхне, тачă пĕтĕçсе тăнине, çавăнпа пĕрлех пролетарилле интернационализмăн, халăхсен тăванла туслăхĕн пурнăçа тĕреклетекен идейисене палăртать. Венгрири ĕççыннисен партийĕн Центральнăй Комитечĕ ячĕпе, Венгри халăхĕ ячĕпе Совет Союзĕнчи Коммунистсен партине XX съездăн мĕнпур решенийĕсене пурнăçлас ĕçре пысăк çитĕнӳсем тума пĕтĕм чун-чĕререн ырă сунатпăр.

Унтан **Г. М. Маленков** юлташ сăмах тухса каланă.

Н. Г. Игнатов юлташ (Горький облаçĕнчи парторганизаци) çакна палăртнă: Центральнăй Комитетăн отчетлă докладĕ пĕтĕм партие, пĕтĕм совет халăхне умра тăракан задачăсене пурнăçлассишĕн творчествăлла ĕçлеме хавхалантаракан хăватлă çăлкуçĕ пулса тăрать.

Партипе правительство куллен-кун тимлĕн тăрăшнипе,—тенĕ малалла Игнатов юлташ,— Горький облаçĕ индустрин пысăк центрĕ пулса тăчĕ. Промышленность продукцийĕ туса кăларасси, 1913 çулхипе танлаштарсан, 96 хут ӳснĕ. Промышленноçа аталантарас енĕпе область пиллĕкмĕш пилĕкçуллăхра пысăк утăм тунă. Çак тапхăрта продукци туса кăларасси 83 процент ӳснĕ. Предприятисенче техника культури ӳснĕ, рабочисен, мастерсен, инженерсемпе техниксен квалификацилле кадрĕсен йышĕ пысăкланнă. Вĕсем ученăйсемпе туслă çыхăнса ĕçленипе пысăк тухăçлă çĕнĕ машинăсемпе приборсем тăваççĕ. Анчах хăшпĕр предприятисен ĕçĕнче çитменлĕхсем чылай-ха. Парти организацийĕ çав çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе пур ĕçсене те тума тăрăшĕ, тенĕ оратор.

Игнатов юлташ планлас ĕçри çитменлĕхсем çинчен чылай каланă. Горький хулинчи автозавод 16 йышши автомашина туса кăларать. Çав вăхăтрах ăна велосипедсем тата ытти вуншар йышши изделисем туса кăларма заданисем параççĕ. Завод автомобильсем кăна туса кăлартăр тесен, ăна çавăн пек заказсенчен хăтарни усăллă пулĕччĕ. Çапла туни предприятие автомашинăсем туса кăларассине 1960 çул тĕлне икĕ хута яхăн ӳстерме май парать.

Февралĕн 18-мĕшĕнче съезд малалла ĕçленĕ.

* * *

Çак кунсенче Коммунистсен партийĕн XX съезчĕ ячĕпе çĕршер саламлă телеграммăсемпе çырусем пыраççĕ. Вĕсенчен кашнинех совет халăхĕ хăйĕн тăван партине вĕçĕмсĕр юратнине, совет çĕршывĕнчи халăхăн анлă массисене Коммунистсен партийĕн çирĕп пĕрлĕхне кăтартса парать.

Совет çыннисем хăйсем съезд умĕнхи ăмăртура илнĕ обязательствăсене пурнăçлани çинчен съезда рапортсем параççĕ, улттăмĕш пилĕкçуллăх заданийĕсене срокчен пурнăçлама хатĕр пулни çинчен пĕлтереççĕ. Сăмахран, Старо-Краматорскри Орджоникидзе ячĕпе тăракан завод коллективĕ янă телеграммăра çакăн çинчен пĕлтернĕ: предприятире Николай Яцур токарь пуçарнипе ĕç тухăçлăхĕн шайне пилĕкçуллăх вĕçленнĕ тĕле ӳстерме палăртнă задание срокчен пурнăçлассишĕн ăмăрту сарăлнă. «Запорожсталь» заводри металлургсем хăйсен предприятийĕнчи пур майсемпе резервсене те шута илни çинчен çыраççĕ, 1956 çулхи плана срокчен тултарма сăмах параççĕ.

Сталинградри трактор завочĕн коллективĕ XX съезда хĕрӳллĕ салам янă. Трактор тăвакансем: «КПСС XX съезчĕн аслă решенийĕсем кăтартса панипе ĕçлесе, совет çыннисем пирĕн çĕршыва татах та хăватлăрах тăвассине, пĕтĕм тĕнчери мир ĕçне тата ытларах вăйлатассине эпир çирĕппĕн шанса тăратпăр», тесе калаççĕ.

Россия Федерацийĕнчи, Украинăри, Узбекистанри тата союзлă ытти республикăсенчи колхозниксен, совхозсемпе МТС-сен работникĕсем ялхуçалăхне хăвăрт вăйлатассишĕн çине тăрса ĕçлеме хатĕр тăни çинчен пĕлтереççĕ. Павлодар облаçĕнчи халиччен сухаламан тата нумайранпа сухаламасăр выртнă çĕрсемпе усă курмалла тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен комсомолецсемпе çамрăксем янă телеграммăра çапла каланă:

«Пирĕншĕн, мĕнпур совет çамрăкĕсемшĕн пекех, пирĕн çĕршыва коммунизм патнелле шанчăклăн илсе пыракан Коммунистсен тăван партийĕ чĕнекен ĕççене, пуринчен те йывăртарах тата кирлĕрех ĕçсене, туса пынă çĕрте ĕçлени питĕ пысăк чыс, унтан хисеплĕрехри пурнăçра нимĕн те çук. Эпир çĕнĕ çĕрсене тĕштырă тата ытти ялхуçалăх продукчĕсем туса илмелли хăватлă никĕс туса хурассишĕн тăрăшăпăр, çав çĕрсене сухаласа акас ĕçе татах та тимлĕрех тата çине тăрса пурнăçласа пырăпăр».

Ватă коммунистсен-подпольщиксен пысăк ушкăнĕнчен çыру илнĕ. Вĕсем съезд делегачĕсене паттăр совет халăхне ырлăх кӳрессишĕн анăçлă ĕçлеме ырă сунаççĕ.

Съезд ячĕпе илнĕ саламлă нумай çырусем хушшинче—Донбасс шахтерĕсем, Совет Союзĕн Антарктикăри экспедицийĕнчи çынсем, Индие кайма çула тухнă «КИМ» теплоходăн экипажĕ, Каховка гидроэлектростанцине тунă çĕрте ĕçлекенсем янă телеграммăсем. (ТАСС).

Механизаторсене воспитани парас ĕç

Улттăмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе КПСС XX-мĕш съезчĕ паракан Директивăсен проектĕнче ялхуçалăхне механизацилессине чылай ӳстерме, 1956—1960 çулсем хушшинче ялхуçалăхне 1.650 пине яхăн трактор туса пама палăртнă. Машина трактор станцийĕнчи пуян техникăпа, яланхи рабочисем вăйĕпе туллин усă курмалла, перекетлĕх режимне çирĕппĕн пăхăнса ĕçлемелле. Тракторсемпе тăвакан ĕçсен хăйне ларакан хакне 16 процента яхăн чакармалла.

МТС-сем умĕнче тăракан пысăк задачăсене пурнăçа кĕртесси техникăпа туллин тата тухăçлăн усă курма пултаракан механизаторсен квалификациллĕ яланхи кадрĕсенчен килет. Çавăнпа та эпир машинăсене мĕнпур хăватпа ĕçлеттерме пултаракан опытлă механизаторсем вĕрентсе хатĕрлесси тата вĕсене воспитани парасси çине тимлĕн пăхатпăр.

МТС коллективĕ пĕлтĕр, 1954 çулхипе танлаштарсан, тракторсем ĕççĕр ларассине икĕ хут ытла чакарнă, производство программине ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 103 процент тултарнă. Çĕнĕ çулччен планран ирттерсе татах чылай ĕçсем тунă. Тракторпа тумалли ĕçсен хăйне ларакан хакне йӳнетнĕ, çулталăкра 39 пин тенкĕ укçа перекетлесе хăварнă.

Иртнĕ çулта чылай колхозсем, механизаторсемпе туслă ĕçлесе, пысăк тухăçлă тырпул, кукуруза тата техникăлла культурăсем пухса кĕртрĕç. «Правда», Шверник ячĕпе тăракан, «Самолет» тата Ленин ячĕпе тăракан колхозсем кашни гектартан 15—16-шар центнер тĕштырă туса илнĕ. «Самолет» колхоз вăйлă кантăр çитĕнтерчĕ, унтан вăл 620 пин тенкĕ тупăш илчĕ. Çак колхозсене пысăк тухăçлă тырпул тата техникăлла культурăсем çитĕнтерме механизаторсем пысăк пулăшу пачĕç.

Партбюро механизаторсем хушшинчи социализмла ăмăртăва кунран-кун вăйлатса пырать. Ăмăрту малта пыракансенчен вĕренме, ĕçри çитменлĕхсене асăрхама, усă курман майсене тупса палăртма тата вĕсене ĕçе кĕртме, ĕçре пиçĕхсе ӳссе пыма пулăшать.

Социализмла ăмăртура чи кирли тата чи пахи—малта пыракансен опытне сарасси тата ĕçе кĕртсе пырасси. Пирĕн МТС-ра лайăх ĕçлекен трактор бригадисемпе комбайнерсем, ытти механизаторсем сахал мар. Партбюро чи малтанах ăмăртура ялан малта пыракан, паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлекен 6-мĕш трактор бригадин опытне тĕпчесе вĕренчĕ. Çак бригадăна коммунист Г. Васильев юлташ ертсе пырать. Иртнĕ çулта бригада тракторсемпе тумалли çулталăкри ĕçсен планне 138,7 процент тултарнă, 15 лашапа вăйлă кашни тракторпа 714 гектар сухаланă чухлĕ ĕç тунă. Çав вăхăтрах 1.567 килограмм çунтармалли тата сĕрмелли япаласем перекетлесе хăварнă. Х. Кирилловпа Н. Тимофеев трактористсем вара «ДТ-54» тракторпа 1.496 гектар вырăнне 2.157 гектар сухаланă чухлĕ ĕç тунă. Çак çитĕнӳ трактор бригади Шверник ячĕпе тăракан колхозри уй-хир бригадисемпе тачă çыхăнса ĕçленипе, тракторсене тĕрĕс-тĕкел ĕçлеттернипе тунă. Колхоз кашни гектартан вăтам шутпа 15 центнер тĕштырă, тухăçлă çĕрулми тата кантăр пухса кĕртрĕ. Колхозниксем те, механизаторсем те ĕçкунĕсем тăрăх нумай тырă тата укçа илеççĕ. Х. Кириллов тракторист, сăмахран, 2,6 тонна тĕштырă, 6.314 тенкĕ укçа илнĕ.

Бригада опычĕ çинчен партбюрона дирекцинче, партин уçă пухăвĕнче сӳтсе явăмăр, ăна ытти бригадăсенче сарма палăртрăмăр. Паха опыт пурнăçа кĕрсе пынине стена хаçачĕнче, кашни пилĕк кунта тухса тăракан бюллетеньсемпе боевой листоксенче анлăн çутатнă. Ĕçри итогсене кашни вунă кунтах пăхса тухнă.

Юлса пыракансем малта пыракансемпе танлашма тăрăшаççĕ. Малтанхи вăхăтра юлса пыракан 12-мĕш бригадăри В. Иванов, В. Михайлов тата М. Николаев трактористсем хăйсен кӳршисемпе—6-мĕш бригадăри Х. Кирилловпа Н. Тимофеев юлташсемпе ăмăртса ĕçлерĕç, вĕсенчен вĕренсе пычĕç. Çулталăк вĕçленнĕ тĕле вĕсем те ӳсĕмсем турĕç, çунтармалли тата сĕрмелли япаласене вара малта пыракансенчен те нумайрах перекетлерĕç. Малта пыракансенчен уйрăм трактористсем кăна мар, мĕнпур масса вĕренсе пырать. Иртнĕ çулта, виçĕмçулхипе танлаштарсан, МТС-ра ĕç планне тултарнă механизаторсен хисепĕ икĕ хута яхăн ӳсрĕ. Вĕсен ячĕсене Хисеп кĕнекине кĕртнĕ, лайăххисенчен чи лайăххисен сăнӳкерчĕкĕсене Хисеп хăми çине çыпăçтарнă. Г. Александров, Н. Петров тата И. Павлов комбайнерсем вара республикăри механизаторсен социализмла ăмăртăвĕнче малти вырăнсене йышăнчĕç. Ăмăртура малта пыракансене пурлăх енчен хавхалантаратпăр, премисем паратпăр. Малта пыракан трактор бригадисене пама куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялав, тракторсемпе комбайнерсене пама хĕрлĕ флажоксем тунă.

Механизаторсене вĕрентсе воспитани пама агитколлектив пулăшать. Агитаторсен хисепĕ яланах пĕр пек пулмасть: хĕлле сахалрах, сураки вăхăтĕнче 23 çынна çитет, тырă вырнă хĕрӳ вăхăтра икĕ хут ытла ӳсет. Ун чухне кашни комбайн агрегачĕ патĕнче агитатор-организатор пулать. Агитатор пулма çынсемпе ĕçлеме пултаракан пултаруллă та пуçаруллă коммунистсене, комсомолецсене, производствăра малта пыракансене уйăрнă. Кунсăр пуçне ертсе пыракан работниксемпе главнăй специалистсенчен докладчиксен ушкăнне тунă. Докладчиксем трактор бригадисенчи агитаторсене пулăшу парас тĕлĕшпе те ответлă пулса тăраççĕ.

Агитаторсем калаçусем ирттереççĕ, стена хаçачĕ, боевой листоксем кăлараççĕ. Иртнĕ çултанпа «Крокодил механизаторсем хушшинче» ятлă сатирăлла стена хаçачĕ кăларатпăр. Вăл питĕ пысăк усă пачĕ, ĕç дисциплинине çирĕплетме, ĕç тухăçлăхне ӳстерме пулăшрĕ.

П. Смородинов, Н. Майоров, В. Кузьмин, В. Михайлов тата К. Демидов агитаторсем агитацилле-массăлла ĕçе производствăлла задачăсемпе тачă çыхăнтарса тума пĕлеççĕ. Вĕсем ĕçлекен трактор бригадисем малта пыраççĕ, механизмсен хăвачĕпе туллин усă кураççĕ.

Кашни агитатор икĕ-виçĕ хаçат тата «Агитатор блокночĕ» илсе тăрать. Кăçал пирĕн пур механизаторсем те хаçат-журнал çырăнса илнĕ.

Кашни механизаторпа уйрăммăн ĕçлени воспитанилле ĕçре паха результатсем парать. МТС-ри парторганизаци секретарĕн—урăх ĕçрен хăтарнă работникĕн—çынсемпе уйрăммăн ĕçлеме майсем çителĕклĕ. Çынсем тĕрлĕ ыйтусемпе партбюрона пырасса кĕтсе ларни çителĕксĕр, çулталăк хушшинче кашни механизатор патне çитме, кашнин ĕçĕпе тата пурнăçĕпе паллашма, кашнин шухăш-кăмăлĕсемпе нушисене тĕпчесе пĕлме тăрăшмалла. Кирлĕ пулсан, кашнине вăхăтра пулăшу памалла. Çакăн пек ĕçлес пулсан, паллах ĕнтĕ, парти работникĕсен яланах çынсем хушшинче пулмалла.

Пĕррехинче С. Миронов тракторист бригадăран тухса кайни çинчен пĕлтерчĕç. Сăлтавне никам та ăнлантарса параймарĕ. Калас пулать, вăл начар мар трактористчĕ, техникăна юрататчĕ, ĕçлеме те ӳркенместчĕ.

— Мĕншĕн ĕçе тухмастăр, кам кӳрентерчĕ, Семен Миронович?—ыйтатăп трактористран.

— Малашне те тухмастăп,—тет вăл.— Ĕçе тĕрĕс шута илмеççĕ. Бригадăра хăшпĕрисем çунтармалли тата сĕрмелли япаласене ытлашши расходлаççĕ, вара ăна перекетлĕ ĕçлекенсем çине те валеççе яраççĕ. Урăх ăçта пур-ши ун пек тĕрĕс мар йĕрке?

Механизаторăн кăмăлĕ хытах хуçăлнă. Бригадирпе учетчике чĕнсе пĕрле калаçма тиврĕ. Тракторист ĕçĕ çине тĕрĕс пăхманни палăрчĕ. Тĕрĕслĕхе çирĕплетрĕмĕр. Миронов юлташ çав кунах ĕçе тухрĕ.

Çынсен çемьери пурнăçĕпе те тăтăшах интересленмелле. Çемьери лару-тăруран та çыннăн ĕç тухăçлăхĕ нумай килет. Акă, Н. бригадир темле салхуллăн çӳрени, бригадăри ĕçсем те ăнăçсăр пыманни палăрчĕ. Юлташĕсем пире вăл арăмĕпе йĕркеллĕ пурăнманни çинчен каласа пачĕç. «Характерсем пĕр пек мар,—терĕ вăл мана.—Ĕç хыççăн киле таврăнсан та сивĕ апат кăна çиме лекет». Хăйĕнпе те, арăмĕпе те чылайччен калаçма, ăнлантарса пама тиврĕ. Вĕсем çемьере пĕр-пĕрне килĕштерсе пурăнма тытăннă хыççăн, бригадăри ĕçсем те лайăхланчĕç.

Хăшпĕрисене пĕрре каласнипех юсама, ӳкĕте кĕртсе çитерме çук. Анчах куллен чăтăмлăн ĕçлени пурнăçра йĕр хăварать. Çын паян мар пулсан, ыран хăйĕн йăнăшĕсене туйса илет. Сăмахран, Куприянов шофер, Игнатьев машиновед тата Соснин механик ĕçре йĕркеллехчĕ, анчах эрех ĕçме юрататчĕç, çемьене манатчĕç. Вĕсене ĕçрен хăтарасси çинчен калаçу пуçланчĕ. Анчах эпир кунпа килĕшмерĕмĕр, вĕсемпе тимлĕрех ĕçлеме тытăнтăмăр. Усăллă пулчĕ—вĕсем майĕпен юсанса пычĕç, ĕçме пăрахрĕç, çемьере лăпкă пурăнма пуçларĕç.

Малта пыракан механизаторсем партие кĕреççĕ. Юлашки вăхăтра кăна 4 механизатор Коммунистсен партине кĕчĕç. Тата 6 çын партие кĕме хатĕрленеççĕ. Пирĕн халĕ ĕçĕн пур участокĕсенче те коммунистсем пур.

Коммунистсемпе ытти кадрсем хăйсен политикăлла пĕлĕвне тавракурăмне КПСС историйĕн кĕске курсне вĕренмелли кружокра ӳстереççĕ. Аслă пĕлӳллĕ юлташсемпе главнăй специалистсем политикăлла экономие харпăр хăй тĕллĕн вĕренеççĕ. Кружок занятийĕсем йĕркеллĕ пулса пыраççĕ.

Коммунистсене парти поручениĕсем пани те воспитанилле пысăк ĕç пулса тăрать. Партилле ĕçе çавăн пекех ытти механизаторсене те хăнăхтарса пыратпăр.

Пирĕн МТС, пĕтĕмĕшпе илсен, çулталăкри ĕçсен планне срокчен тултарчĕ пулин те, хăшпĕр ĕçсене палăртнă чухлĕ тăваймарĕ. Уйрăмах çĕнĕ техникăпа çителĕксĕр усă куртăмăр. Çакна шута илсе, партбюропа дирекци трактористсемпе механиксен квалификацине ӳстерме йышăнчĕç. Ку тĕлĕшпе МТС-ра механизаторсен кĕске вăхăтлăх курсне йĕркелерĕмĕр. Курс ĕçне станцин главнăй инженерĕ Шиловпа механик Кузьмин юлташсем ертсе пыраççĕ. Занятисем ирттерме опытлă механиксене, трактористсене тата ялхуçалăх специалисчĕсене явăçтарнă.

МТС-ри механизаторсем хушшинче тĕрлĕ профессие вĕренсе алла илес ĕç те сарăлса пырать. И. Павлов комбайнер, тĕслĕхрен, машинист ĕçне вĕренчĕ. Халĕ вăл электростанцире ĕçлет. М. Иванов шофер та электрик специальноçне илчĕ. Чылай механиксем комбайнпа тырă вырма пултараççĕ.

МТС коллективĕ Коммунистсен партийĕн XX-мĕш съездне производствăлла çитĕнӳсемпе паллă тăвать. Механизаторсем февралĕн 14-мĕшĕ тĕлне тракторсемпе ялхуçалăх машинисен 80 процентне юсаса çитерчĕç. Вĕсем кăçал—улттăмĕш пилĕкçуллăхăн малтанхи çулĕнче—тракторсемпе пĕлтĕрхинчен 13 пин гектар чухлĕ ытларах ĕç тума сăмах пачĕç. Механизаторсем илнĕ обязательствăсене пурнăçласа пыраççĕ.

Механизаторсене воспитани парас ĕçре çитменлĕхсем те чылай-ха. Халлĕхе пур агитаторсем те политикăлла-массăлла ĕçе пурнăçпа тачă çыхăнтарса туса пыма, çынсен политикăлла çĕкленĕвне умри задачăсене татса панă çĕре яма пĕлеймеççĕ.

Партбюро çак çитменлĕхсене пĕтерсе, МТС-ра туслă та çирĕп коллектив туса хурассишĕн кĕрешет. Парти çĕнĕ пилĕкçуллăхра ялхуçалăхĕ умне кăларса тăратнă пысăк задачăсене чыслăн пурнăçлама пĕтĕм коллектива мобилизацилет.

Л. МАКАРОВ.
Элĕк МТС-ĕнчи партбюро секретарĕ.

Республикăри ĕçсыннисем Коммунистсен партийĕн аслă политикине пĕтĕм кăмăлтан ырлаççĕ

В. И. Ленин кăтартса панă çулпа

Ĕç кунĕ вĕçленнĕ хыççăн рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем электроаппаратура завочĕн пĕр пысăк цехне пухăнчĕç.

КПСС XX съезчĕ ячĕпе пухăннă митинга профсоюз завкомĕн председателĕ Л. Новиков юлташ уçать. Вăл производство начальникне В. Златопольский юлташа сăмах парать.

— Çирĕмĕш съезд,— тет вăл,— пирĕн партипе совет халăхĕн пурнăçĕнче тата коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн кĕрешес ĕçре мĕн тери пысăк вырăн йышăнса тăнине эпир пурте питĕ лайăх пĕлсе тăратпăр.

Аслă Ленин кăтартăвĕсене пурнăçласа, Коммунистсен партийĕ социализм экономикин мĕнпур отраслĕсене аталантармалли, пирĕн Тăван çĕршывăн оборонине тĕреклетмелли, халăх пурнăçне лайăхлатмалли никĕс пулса тăракан йывăр промышленноçа пуринчен ытларах аталантарса пырать. Коммунистсен партийĕ халăхшăн ырми-канми тăрăшать. Çавăнпа та ĕнтĕ ăна мĕнпур ĕçсыннисем чун-чĕререн юратаççĕ. Владимир Ильич Ленин сăмахĕсемпе каласан, парти вăл пирĕн танхăрăн ăс-тăнĕ, чысĕ тата совеçĕ пулса тăрать. Ăнă мĕншĕн ĕнтĕ коммунистсен пысăк йышлă çарĕ кăна мар, мĕнпур ĕçсыннисем парти съездне пысăк çĕкленӳпе кĕтсе илчĕç.

— Пирĕн завод коллективĕ, мĕнпур совет халăхĕпе пĕрле, съезд умĕнхи социализмла ăмăртăва хутшăнса,— тет малалла Златопольский юлташ,— производствăра çитĕнӳсем тума пысăкрах обязательствăсем илчĕ. Эпир паян Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XX съездне çакăн пек рапорт паратпăр: пирĕн коллектив съезд ячĕпе илнĕ обязательствăна чыслăн пурнăçларĕ: продукци туса кăларассине, 1954 çулхипе танлаштарсан, 26,4 процент ӳстерчĕ (обязательство тăрăх 15,3 процент ӳстерме палăртнă пулнă). Завод коллективĕ тата мĕнпур цехсемпе уйрăм участоксем, обязательствăра кăтартнă пекех, графика пĕр-тикĕс пурнăçласа пыма пуçларĕç. 1954 çулхипе танлаштарсан, 1955 çулта ĕç тухăçлăхĕ 25 процент чухлĕ ӳснĕ.

Завод январьти плана 106,8 процент тултарнă, изделисем тумалли номенклатурăна пурнăçланă.

Трибуна умĕнче—штамповочнăй цехри технолог Л. Соловьева юлташ. Вăл КПСС Центральнăй Комитечĕпе Совет Правительствине чĕререн тав тăвать.

— Партипе Правительство улттăмĕш пилĕкçуллăхра рабочисемпе служащисем валли çичĕ сехетлĕ ĕç кунĕ тума, çитес вăхăтра рабочисемпе служащисем валли шăматкун тата праçниксем умĕнхи кунсенче ултă сехетлĕ ĕç кунĕ тума палăртаççĕ. Партипе Правительство совет çыннисемшĕн тăрăшни пире чĕререн хумхантарать,— тет Соловьева юлташ.

Паллă фрезеровщик Н. Королев юлташ сăмахĕсене митинга пухăннисем тимлĕн итлерĕç.

— Н. С. Хрущев юлташăн докладне вулатăп та пирĕн юратнă Тăван çĕршывăн çитĕнĕвĕсем мĕн тери чаплă, улттăмĕш пилĕкçуллăхра задачăсем вăлама çук пысăк пулнине куратăп. Эпĕ, Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XX съезчĕ ячĕпе социализмла ăмăртăва хутшăнса, кашни уйăхри задание 350 процент тултарса пыма сăмах панăччĕ. Хамăн обязательствăна эпĕ чыслăн пурнăçласа пыратăп. Съезд уçăлнă вăхăт тĕлне эпĕ сур çул хушшинчи задание пурнăçларăм. Парти халăх хуçалăхне малалла вăйлатас, ĕçсыннисен пурнăçĕпе культурин шайне татах та çӳллĕс тĕлĕшпе палăртнă пысăк ĕçсене ăнăçлă пурнăçлас тесе, эпĕ малашне те ырми-канми тăрăшатăп.

Электроаппаратура заводĕнче ĕçлекенсен коллективĕ Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XX съезчĕн ĕçĕсене чунчĕререн ырлать, производствăра тата пысăкрах çитĕнӳсем тума сăмах парать.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Шупашкарти пир-авăр комбинатĕнчи çип арлакан фабрикăра. Т. Воронова агитатор мотальнăй цехра ĕçлекен мотальщицăсене КПСС XX съезчĕн материалĕсене вуласа парать.

П. Ефремов фотоӳкерчĕкĕ.

Халăх ырлăхĕпе телейĕшĕн

Шупашкарти пир-авăр комбинатĕнче ĕçлекенсем КПСС Центральнăй Комитечĕн Пĕрремĕш Секретарĕ Н. С. Хрущев партин XX съездĕнче тунă доклада тулли кăмăлпа кĕтсе илчĕç.

Комбинат фабрикисенче КПСС XX съезчĕ ячĕпе митингсем пулса иртрĕç. Пир-авăр тĕртекен цехри партбюро секретарĕ И. Дерябин юлташ, митинг уçса, КПСС Центральнăй Комитечĕн отчетĕнче совет çыннисен ĕмĕчĕсемпе шухăшĕсем палăрса тăни çинчен каларĕ. Унтан фабрика заведующийĕ А. Петров юлташ сăмах илчĕ.

— Эпир,— тет Петров юлташ,— мухтавлă Коммунистсен партийĕ тавра тачă пĕтĕçсе тăратпăр. Парти—пирĕн çулпус, пирĕн çĕнтерӳсен организаторĕ. Вăл пире телейлĕ пуласлăх патне, коммунизм çĕнтерĕвĕ патне илсе пырать. Совет çыннисем промышленноçра та, ялхуçалăхĕнче те пысăк çитĕнӳсем тăваççĕ. Вĕсем ĕç тухăçлăхне ӳстерме тăрăшаççĕ.

Фабрика заведующийĕ сатин тĕртсе кăларакансен ĕçри ӳсĕмĕсене илсе кăтартать.

— Халĕ эпир,— тет вăл,— кашни кунах вуншар пин метр паха пир-авăр тĕртсе кăларатпăр. Работницăсем продукци туса кăларассине куллен ӳстерсе пыма, унăн пахалăхне яланах лайăхлатма тăрăшаççĕ. Вĕсем КПСС XX съезчĕ ячĕпе йышăннă обязательствăсене чыслăн пурнăçласа пыраççĕ. Пĕрремĕш цехра ĕçлекенсем оборудованипе усă курас енĕпе уйрăмах паха çитĕнӳ турĕç, продукцин пахалăхне лайăхлатрĕç. Партипе правительство ĕçсыннисен пурнăçне лайăхлатассишĕн куллен-кун тăрăшни пире пĕтĕм вăя парса ĕçлеме хавхалантарать, эпир 1956 çулхи производство планне срокчен тултарма пулатпăр.

Трибуна çинче—шлихтовальщик Николай Дрезин.

— КПСС XX съездĕнче партин Центральнăй Комитечĕн Пĕрремĕш Секретарĕ Н. С. Хрущев юлташ тунă докладра,— тет вăл,— пирĕн задачăсене тĕплĕн палăртса панă. Коммунистсен партийĕ пире тинтерлĕ пулма вĕрентнине эпир яланах асра тытма тивĕçлĕ. Пирĕн ĕçре пĕр килограмм кăна çип перекетлени те планран ирттерсе 20 метра яхăн пир тĕртсе кăларма май парать. Эпĕ малашне те нормăна ирттерсе тултарма, чĕртавар перекетлеме пулатăп.

Иккĕмĕш цехра ĕçлекен работница Ю. Петрова юлташ сăмах илет. Вăл пирĕн ĕçсыннисем Коммунистсен партийĕпе Совет правительствине халăх пурнăçне лайăхлатма тăрăшнăшăн чун-чĕререн тав туни çинчен калать.

—Çитес çулсенче эпир кунне 7-шер сехет ĕçлеме пуçлатпăр. Çакна май ĕнтĕ пирĕн, хĕрарăмсен, килти ĕçсене тума та, канма та вăхăт ытларах пулать. Коммунистсен партийĕ пирĕншĕн тăрăшни çине ответлесе, эпир малашне татах та лайăхрах ĕçлĕпĕр.

Митинтра çавăн пекех пĕрремĕш цехри смена мастерĕ К. Кириллова, мастер помощникĕ А. Лагутин юлташсем тухса каланă. Вĕсем те ĕç тухăçлăхне ӳстерсе пыма, ĕçсыннисем валли паха пир-авăр ытларах туса кăларма сăмах панă.

Арлакан фабрикăра ĕçлекенсен митингне пухăннисем те КПСС Центральнăй Комитечĕн ĕçĕсем çинчен Н. С. Хрущев юлташ XX съездра тунă доклада тулли кăмăлпа ырларĕç.

Çип арлакансем, КПСС XX съезчĕ ячĕпе ăмăртса ĕçлесе, планран ирттерсе 28 тонна çип арланă. Вĕсем ĕç тухăçлăхне ӳстерсе, продукци пахалăхне лайăхлатса тата унăн хăйне ларакан хакне йӳнетсе пыма пулчĕç.

М. ШИБАЕВ.

Ĕçри хастарлăха ӳстерсе пыраççĕ

ЧКАЛОВСКИ. Районти ĕçсыннисем Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ партин XX съездне туса панă отчетлă доклада пысăк тимлĕхпе сӳтсе яваççĕ. КПСС Центральнăй Комитечĕн Пĕрремĕш Секретарĕ Н. С. Хрущев юлташ тунă отчетлă докладне пичетленĕ хаçатсене самолетпа илсе килсенех почтальонсем вĕсене çырăнса илекенсем патне хăвăрт çитерчĕç.

...«Путь Ленина» колхозăн ĕне ферми. Вăл ял вĕçĕнче вырнаçнă. Выльăх пăхакансем патне колхозри парторганизаци секретарĕ А. Микин юлташ çитрĕ. Фермăра ĕçлекенсем часах хăйсен çуртне пухăнчĕç. Партин XX съезчĕн ĕçĕсем çинчен хаваслă калаçу пуçланчĕ.

— Паянхи калаçура, — терĕ Минин юлташ,—КПСС Центральнăй Комитечĕн отчетлă докладĕн малтанхи пайĕсемпе паллаштаăпăр.

Минин юлташ Н. С. Хрущев юлташ тунă докладăн Совет Союзĕн шалти лару-тăрăвĕ çинчен калакан пайне вуласа, тĕплĕн ăнлантарса пачĕ.

Социализмла система йĕлашки çулсенче тунă историлле чаплă çитĕнӳсем çинчен доярккăсем хытă интересленсе итлеççĕ. Вĕсем Совет Союзĕ ертсе пыракан социализмла лагерĕн ӳсĕмĕсемшĕн чĕререн савăнаççĕ, тăван партипе унăн ленинла Центральнăй Комитетне тулли кăмăлпа ырласа мухтаççĕ.

— Парти пĕтĕм совет халăхĕ çултан-çул лайăхрах, пуянрах пурăнтăр тесе тăрăшать, — терĕ доярка-комсомолка Валентина Раськина.—Пирĕн çĕршывра промышленноçа тата ялхуçалăхне çĕнĕ хăватпа аталантарма пысăк ĕçсем туса ирттереççĕ. Çак ĕçсем вĕсем пурте аслă çулпуçăмăр Ленин туса хунă парти ячĕпе çыхăннă. Пирĕн малашне тата лайăхрах ĕçлемелле.

Калаçăва ферма заведующийĕ коммунист Н. Задоров юлташ хутшăнать. Вăл доярккăсене социализмла ăмăртăва тата вăйлатма, кăçал сĕт суса илессипе районти малта пыракан колхозсемпе танлашма, вăй ытларах хурса ĕçлеме чĕнет.

Дояркăсем çĕнĕ туйăмпа, çĕнĕ вăй-хăватпа ĕçлеççĕ. Стена çинче çакăнса тăракан хĕрлĕ хăма çинче кашни доярка ăмăртура мĕнле вырăн йышăнса тăнине çырса хунă. Январь уйăхĕнче ăмăртури пĕрремĕш вырăна Зоя Хлебникова доярка йышăннă. Çавăншăн ăна колхоз правленийĕпе парти бюровĕн куçса çӳрекен хĕрлĕ вымпелне панă. Февраль уйăхĕнче вара сĕт суса илессипе Валентина Раськина комсомолка малта пырать.

«Путь Ленина» колхоз, иртнĕ çулсенче юлса пынăскер, кăçал выльăх-чĕрлĕхрен тупăш илессипе мала тухса пырать. Çĕнĕ ялхуçалăх çулĕн малтанхи 4 уйăхĕнче, пĕлтĕрхи çав вăхăтринпе танлаштарсан, икĕ хут ытларах сĕт суса илнĕ. Колхоз членĕсем Воронеж облаçĕнчи ялхуçалăх ĕçченĕсен чĕнĕвне сӳтсе явса, кăçал кашни ĕнерен 1.500 литр сĕт суса илме, 1960 çул тĕлне палăртнă хисепе 1957 çултах пурнăçлама йышăннă.

Çак задачăна пурнăça кĕртес тесе выльăх апачĕн никĕсне вăйлатаççĕ. Кăçал 310 гектар, е пĕлтĕрхинчен виçĕ хут ытларах, кукуруза акса тăваççĕ. Ун валли пусă çаврăнăшĕнче чи лайăх çĕр уйăрнă. Халĕ унта тислĕк кăлараççĕ, юр тытаççĕ.

Колхозри пуçламăш парторганизаци КПСС XX съезчĕн материалĕсене кашни колхознике ăнлантарса пама тăрăшать. Мĕнпур агитаторсем çак пархатарлă ĕçе хĕрӳллĕн тытăнчĕç.

Т. ИВАНОВ.
(Хамăр корр.).

Шахмат енĕпе РСФСР-та мала тухмалли зонăри ăмăрту

Чăваш АССР чемпионĕ В. Никитин пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ

Шахмат енĕпе РСФСР-та мала тухассишĕн Шупашкарта ирттернĕ зонăри ăмăрту çирĕм кун хушши пычĕ. Автономиллĕ республикăсемпе облаçсенчен пухăннă чи вăйлă шахматистсем сур финалсенчи ăмăртусене хутшăнма тивĕçлĕ пулассишĕн питех те тăрăшса вылярĕç.

Февралĕн 16-мĕшĕнче юлашки, вунпиллĕкмĕш тур пулчĕ. «Динамо» клубне шахмат спортне юратакансем яланхинчен нумайрах пухăнчĕç. Чи малтанах кунта Никитинпа Дамский выляса пĕтереççĕ. Вĕсен партийĕ нихăшĕ те çĕнтерейменнипе вĕçленет. Никитиншăн пулсан вăйă результачĕ кун пек пулни те çителĕклĕ. Вăл пĕрремĕш вырăн йышăнать. Мастер кандидачĕсем Новопашинпа Радченко тата Сергиевскипе Волошин вылянă партисем те çавăн пекех нихăшĕ те çĕнтерейменнипе пĕтрĕç. Мастер кандидачĕ Петров—Козловран, Чугунов—Гизатуллинран выляса илчĕç. Игумновпа Стрекаловский партийĕ нихăшĕ те çĕнтерейменнипе пĕтрĕ. Хавский—Алешина, Алексеев—Кубарева çĕнтерчĕç.

Çапла ĕнтĕ турнирта Чăваш АССР чемпионĕ В. Никитин пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ. Вăл 15 очко выляса илме май пур пулсан, 11 очко выляса илчĕ. Мастер кандидачĕ Новопашин (Мускав облаçĕнчен), 10 очко пухса, иккĕмĕш, Радченко (Краснодар крайĕнчен), 9,5 очко пухса, виççĕмĕш вырăна тухрĕ. Мастер кандидачĕ Волошинпа (Тутар АССР-ĕнчен) Козлов (Арзамас облаçĕнчен)—9-шар очко выляса илчĕç. Вĕсем хыççăнхи вырăнсене мастер кандидачĕсем Сергиевский (Чăваш АССР-ĕнчен), Хавский (Ленинград облаçĕнчен), Петров (Архангельск облаçĕнчен) тата пĕрремĕш разрядри шахматист Кубарев (Горький хулинчен) йышăнчĕç. Вĕсен пурин те 8,5-шер очко. Архангельск облаçĕн представителĕ Алексеев, 7,5 очко пухса, вуннăмĕш, Горький облаçĕн представителĕ Алешин, 6,5 очко пухса, вунпĕрмĕш вырăн йышăнчĕç. Тутар АССР-ĕн представителĕ Дамский (унăн 6 очко) вуниккĕмĕш вырăна тухрĕ, Чăваш АССР представителĕ Чугуновпа Архангельск облаçĕн шахматисчĕ Стрекаловский, 5-шер очко выляса илсе, 13—14-мĕш вырăнсене пайларĕç, Игумнов (Чăваш АССР-ĕнчен), 4 очко выляса илсе, вунпиллĕкмĕш, Мари АССР-ĕн представителĕ Гизатуллин (унăн 3,5 очко) вунулттăмĕш вырăн йышăнчĕ.

Çак турнирта Никитин яланах пĕр пек лайăх вылянине палăртмалла. Вăл 8 шахматистран выляса илчĕ, пĕр шахматиста кăна выляса ячĕ. Чăваш республикин чемпионĕ мастер кандидатне Новопашина çĕнтернĕ парти çак турнирти чи лайăх партисенчен пĕри шутланать. Никитин пиллĕкмĕш тур хыççăн малта пыма тытăнчĕ те, пĕрмаях малта пычĕ. Вăл вылянă партисене илес пулсан, унăн мастер кандидачĕн ятне илме тивĕç пуррине куратăн. Шахмат енĕпе РСФСР-та мала тухмалли сур финалти ăмăртура та вăл Чăваш республикин чысне тивĕçлипе хӳтĕлессе шанма пулать.

Чăваш республикинчи пултаруллă шахматистсенчен пĕри—мастер кандидачĕ Сергиевский лайăхрах выляссă кĕтмеллеччĕ. Анчах та юлашки турта вăл, Волошинран выляса илме май пулнă пулин те, ăна çĕнтереймерĕ, çакна пула сур финалти турнира хутшăнма май килмерĕ.

Ăмăрту вĕçленнĕ ятпа пулнă вечерта мала тухнă шахматистсене дипломсемпе тĕрлĕ парнесем пачĕç. Новопашина ытти республикăсемпе облаçсенчи чи лайăх шахматиста пама «Советская Чувашия» хаçат тунă парнене, Сергиевские—турнирта мала тухнă шахматистсемпе уйрăмах лайăх вылянă шахматиста пама «Коммунизм ялавĕ» хаçат тунă парнене панă.

Февралĕн 17-мĕшĕнче мастер кандидачĕ Радченко Шупашкар хулинчи шахматистсем валли лекци вуларĕ тата пĕр вăхăтра 20 çынпа вылямалли сеанс ирттерчĕ.

М. РОШАЛЬ.
Ăмăртăвăн главнăй судьи.

Хăçан йывăç парĕç-ши?

Эпĕ хамăн тăватă сыллă çемьепе атто патĕнчех пурăнатăп. Халĕ манăн пӳрт лартса, уйрăлса тухмалла.

Пӳрт лартма йывăç илес тесе, икĕ çул битĕ райплана çӳретĕп. Райплан председателĕ Н. Волков юлташ çаплах мана сирсе хăварать, çав вăхăтрах ыттисене йывăç парать. Пĕлтĕр пирĕн Чăваш Сăкăт ял Советне 250 кубометр йывăç уйăрса пачĕç, анчах списока мана кĕртмерĕç.

Аптранипе Чăваш АССР Министрĕсен Советне çыру çыртăм. Министрсен Совечĕ хушнипе Волков юлташ мана йывăç паратпăр, терĕ. Каллех пытăм ун патне. Анчах кăлăхах.

Çĕнĕ çул пуçламăшĕнче Министрсен Советне иккĕмĕш хут çыру çыртăм. Унтанпа уйăх иртрĕ, йывăç мар, ответ та çук...

Эпĕ иккĕмĕш группăри инвалид. Çак ыйтупа пĕрмай çӳреме, йывăрлăхсене тӳсме мана çăмăл мар.

К. ПЛАТОНОВ,
Чкаловски районĕнчи «Красное Знамя» колхоз членĕ.

Пĕлтерни

Шупашкар хула Совечĕн исполкомĕ хула Совет депутачĕсене çакăн çинчен пĕлтерет: 1956 çулхи февралĕн 24-мĕшĕнче, 19 сехетре, ĕçсынни депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн çиччĕмĕш сессийĕ пухăнать.

Сесси КПСС хула комитечĕн библиотекин (Урицкий урамĕ) пĕчĕк залĕнче пулса иртет.

Ĕçсынни депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн исполкомĕ.

Редактор **М. Н. ЯКИМОВ.**

Хулари тата республикăри экрансем çинче çĕнĕ илемлĕ фильм

„СУДЬБА БАРАБАНЩИКА"

кăтартма тытăнаççĕ.

Сценари авторĕ Аркадий Гайдар.
Режиссерĕ В. Эссымонт.
Композиторĕ Л. Шварц.

Рольсенче çаксем выляççĕ:
Д. Сагал (Баташов), Сережа Ясинский (Сережа Баташов). А. Ларионова. А. Абрикосов, Хохряков.

Мускаври М. Горький ячĕпе тăракан киностуди 1955 çулта кăларнă.

Нимĕçсен аслă поэчĕ Генрих Гейне

Февралĕн 17-мĕшĕнче нимĕçсен аслă поэчĕ тата демократĕ Генрих Гейне вилнĕренпе çĕр çул тултарчĕ.

Генрих Гейне 1797 çулта Рейн шывĕ çинчи Дюссельдорфра пуян мар еврей çемйинче çуралнă. Ашшĕ-амăшĕсем ывăлне коммерци ĕçне вĕрентме тарăшнă, анчах пулас поэт ку ĕçе пачах юратман. Вăл 1819 çулта университета кĕнĕ. Вăл Боннра, Гĕттингенра, кайран Берлинра юридическăй наукăсене вĕреннĕ.

Гейнен пĕрремĕш сăввисем 1817 çулта пичетленнĕ. Малтанхи сăввисенче вăл романтиксен ученикĕ пулни палăрать. «Çамрăк чĕре асапĕсем» ятлă кĕнекинче поэт пурнăçри ытла хăйĕн телейсĕр юратăвĕ, чĕре пăшăрхавĕ, чун юратăвĕ çинчен çырать.

1827 çулта пичетленсе тухнă «Юрăсен кĕнекинче» вăл йĕри-тавралли пурнăç çине урăхла пăхма тытăнни курăнать. Поэт çĕнĕ сăвăсенче юрату савăнăçĕпе чун ыратăвĕ çинчен кăна çырмасть. Вăл общественăлла пурнăçра кая юлнă феодалла Германирен тĕрĕхласа кулать, питлет.

1826—1831 çулсем хушшинче Гейне «Çул çинче курнă сăнсем» тăватă кĕнекине пичетлесе кăларнă. Пĕрремĕш кĕнекинче «Гарцра курса çӳренисем» çинчен çырнă. Унта поэт вăл вырăнти мĕскĕн филистерсенчен кулать, йĕри-тавраллă илемлĕ çутçанталăк сăнĕ çине пăхса чĕререн савăнать. Иккĕмĕш кĕнекине лирикăлла дневник темипе юрать. Гейне ача чухнехи вăхăта аса илет, Наполеон салтакĕсем Дюссельдорф хулине йышăннă тапхăра çутатса парать.

Кунта вăл Ле Гран ятлă барабан çапакан француз салтакне çинчен хавхаланса çырать. Поэтăн пĕтĕм чун-хавалĕ Францири буржуалла революци енче.

Виççĕмĕшпе тăватăмĕш кĕнекисене Гейне Италипе Англире çӳренĕ хыççăн пичетлесе кăларнă. «Англи сыпăкĕсенче» вăл Лондонри ĕçсыннисен чухăн, тĕксĕм, телейсĕр кун-çулне кăтартать. Çавăнтах поэт буржуалла Америкăна «ирĕклĕхĕн чи пысăк тĕрми», тесе питлет.

Иртнĕ ĕмĕрĕн 20—30-мĕш çулĕсенче Гейне хăйĕн прозинче, новеллисенче, историлле-философилле публицистикинче, мĕнпур вăй-хăватне хурса, дворянсемпе клерикалсене, шовинистсемпе реакционерсене хирĕç кĕрешнĕ. Çавăнпа та ун кĕнекисене пичетлеме чарнă, феодалла Германире вăл малалла ĕçлеме пултарайман.

1831 çулта Генрих Гейне Парижа тухса каять. Унта поэт французсен малта пыракан интеллигенцийĕн представителĕсемпе паллашать, нимĕç эмиграчĕсен сулахай юхăмне сыхарать. 1843 çулта вăл Карл Маркспа паллашать, унпа туслă пурăнать.

1844 çулта Гейне хăйĕн чи пысăк «Германи (Хĕллехи юмах)» ятлă поэмине çырать. Ку вăл—революци поэми, этемлĕх гимнĕ. Кунта поэт пусмăрçăсен саманине аркатса тăкса, çĕнĕ йĕрке, çĕнĕ пурнăç тума чĕнет.

Пурнан пурнăçра чăн тĕслĕх тупар!
Çитет, сахал мар хӳрлăх курнă!
Харам пырсемшĕн халиччен сахал мар
Хыткан алăсем пирĕн сурнă.

Хăйĕн идейăлла тата политикăлла ӳсĕмне вăл «Силезири пир-авăр тĕртекенсен пăлханăвĕ (1844 çул)» ятлă сăвăнче те сиенччĕн кăтартса парать:

Чунтан кураймасăр турра ылханатпăр!
Эпир нушара, выçлăхра пурăнатпăр
Эпир пулăшу кĕтрĕмĕр пулĕхрен,
Анчах улталарĕ вăл, кулчĕ пиртен...

Тĕртетпĕр эпир кунĕн-çĕрĕн. Аса
Пĕрре чарăнмасăр тăрать выляса.
Германи, сана çичĕ хут ылханса,
Чунтан-чĕререн курайми тарăхса,
Сан валли вилĕм пирĕ тĕртетпĕр.

1846 çулта Гейне чире кайнă, анчах вăл çырма пăрахман. Саккăр çула яхăн асапланса выртнă хыççăн, Генрих Гейне 1856 çулта Парижра вилнĕ.

Фашистла Германире Гейне кĕнекисене сунтарса янă, унăн юррисене юрлама чарнă. Анчах вăл вăхăтра та Гейне юррисем нимĕç халăхĕ хушшинче пурăннă.

Гейне поэзийĕ нимĕç халăхĕшĕн сывăх та хаклă. Демократиллĕ Германи Республикинче аслă поэтăн произведенийĕсене нумай пичетлесе кăлараççĕ.

Совет Союзĕнче Г. Гейне творчествине юратаççĕ, унăн кĕнекисене пысăк тиражпа пичетлеççĕ. Гитлерла фашистсене хирĕç çапăçнă чух поэтăн политикăлла сăввисем мăкалма пĕлмен хĕçпăшал пулса тăчĕç.

Гейне произведенийĕсене чăвашла куçарма тытăнаканĕсенчен пĕри Хумма Семенĕ пулнă. Вăл 1923 çултах унăн хăшпĕр сăввисемпе сонечĕсене куçарнă. Юлашки вăхăтра Гейне творчествипе чăваш халăхне паллаштарас ĕçре чылай поэтсем тăрăшса ĕçлеççĕ.

«Эпĕ — этемлĕх ирĕкĕшĕн кĕрешекен салтак»,—тенĕ Гейне хăй çинчен. «Гимн» ятлă прозăлла сăвăра вăл çапла çырнă:

«Эпĕ—хĕç, эпĕ—çулăм. Эпĕ сире тĕттĕмре çутатрăм. Çапăçу пуçлансан, эпĕ чăн малти ретре кĕрешрĕм. Йĕри-тавра тусăмсен виллисем выртаççĕ, анчах эпир çĕнтертĕмĕр. Эпир çĕнтертĕмĕр. Йĕри-тавра ман тусăмсен виллисем выртаççĕ пулсан та. Хаваслă çĕнтерӳ юрринчен питару кĕвви илтĕнет. Анчах пирĕн савăнма та, хурланма та вăхăт çук. Барабансем çĕнĕрен янăраççĕ. Çĕнĕ кĕрешӳ пуçланать. Эпĕ—хĕç, эпĕ—çулăм».

М. ФЕДОТОВ.

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ февралĕн 19-мĕшĕнче кăнтăрла чăвашла спектакль «Асран кайми кунсем», каçхине чăвашла спектакль «Юрату вилĕмсĕр». февралĕн 20-мĕшĕнче чăвашла спектакль «Виçĕ туй», февралĕн 21-мĕшĕнче чăвашла спектакль «Кай, кай Ивана». Спектакльсем 19 сехет те 30 минутра пуçланаççĕ.

Рашид Муллануровна Тимургалеев гражданин, Шупашкар хулинчи Чапаев поселокĕнче 15-мĕш çуртри 5-мĕш хваттерте пурăнаканскер, арăмĕпе — Минихалиса Минигореевна Закирова гражданкăпа (Шупашкар хулинчи Чапаев поселокĕнче 15-мĕш çуртри 5-мĕш хваттерте пурăнать) уйрăлас пирки ĕç пуçарать.

Ĕçе Шупашкар хулинчи 5-мĕш участокри халăх судĕнче пăхса тухаççĕ.

КИНО

«РОДИНА». Февралĕн 19—20-мĕшĕсенче кăнтăрлахи сеанссенче тĕслĕ илемлĕ çĕнĕ кинокомеди «Гость с Кубани» кăтартаççĕ. Сеанссем 10, 11.30, 13, 14.30 сехетсенче пуçланаççĕ.

Февралĕн 19-мĕшĕнче каçхи сеанссенче Демократиллĕ Германи Республикинче кăларнă çĕнĕ илемлĕ фильм «Сильнее ночи» кăтартаççĕ. Сеанссем 16, 18.15, 20 тата 22 сехетсенче пуçланаççĕ.

Февралĕн 20-мĕшĕнче 16, 18.15, 20 тата 22 сехетсенче пуçланакан сеанссенче çĕнĕ илемлĕ фильм «Земля и люди» кăтартаççĕ.

Кинотеатрăн концертсем ирттермелли залĕнче февралĕн 19—20-мĕшĕсенче «Тахир и Зухра» фильм (çĕнĕ кинокопи) кăтартаççĕ. Сеанссем 10 сехет те 30 минутра пуçланаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—4-17, ответлă секретарь—4-26, секретариат—7-32, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-99, обзорсен пайĕ—6-84, пропаганда пайĕ—5-21, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—3-04, совет строительстви пайĕ—3-04, литературăпа искусство пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—3-54, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 00643 Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Заказ № 573. Тираж 37.000 экз.